# АРҪЫН САМАХӖ

I

Виҫҫӗн...

Варринче — ҫинҫе пилӗклӗ чипер хӗрарӑм. Ҫийӗнче унӑн тӗрӗллӗ илемлӗ кӗпе. Сӑнӗ-пуҫӗпе пӗвне кура никам та ӑна ҫирӗм тӑватӑ ҫул памӗ. Вунтӑххӑртан иртмен ку чи перкке тейӗ, ача ҫуратса ӳстернине те ӗненмӗ. Унра хӑйӗнче ҫеҫ мар, ятӗнче те илем тапса тӑрать. Таня ятлӑ вӑл. Ахальтен-и, общежитири йӗкӗтсем ун патне, пӗрех мана тиркет тесе, пыма та хӑяймастчӗҫ.

— Ма апла вӗсем? Эп мӗн... нихӑшне те килӗшместӗп-им?— ыйтнӑччӗ вӑл пӗррехинче Кирукран.

— Хӑюлӑх ҫитерейменнипе... Сан патна пыма тивӗҫлӗ мар теҫҫӗ...

— «Тивӗҫлӗ мар»... Каплипе эп ватта юлмӑп-и?

— Юлмастӑн!

— Эй, ача!— пӑлханса калаҫнӑччӗ Таня.— Аҫтан-ха татсах калаятӑн эс, Кирук? Йӗкӗтсен шухӑшне ыйтса тухрӑн-и? Е ман пирки юмӑҫ пӑхтартӑн-и?

— Унсӑрах пӗлетӗп... Ҫитес кӗрчен эсӗ качча тухатӑн.

— Эй, ача! Мӗншӗн «ҫитес кӗркунне»? Мӗншӗн тепӗр султан е иккӗрен мар?

— Ҫитес кӗрте Иосиф салтака каять. Унччен...

Таня ӑна аллинчен тытса хӑй патнерех туртнӑччӗ, пичепе Кирук питне сӗртӗнсе илсен, куҫӗнчен чӑрр! пӑхса ыйтнӑччӗ:

— Мӗскер «унччен»? Тапратрӑн-тӑк, каласа пӗтер, ӑша ан вӑркаттар.

— Унччен Иосифӑн авланмалла.

— Авланмасан?..

— Сана ӗмӗрлӗхе ҫухатать.

— Ак т-ата!— хӗп-хӗрлӗ хӗрелсе кайнӑччӗ хӗр.— Купа та пӗлетӗн. Юмӑҫ мар-и эс, Кирукӑм-шӑллӑм? Юмӑҫ пулсан, кала-ха эппин: мана ма ҫухаттӑр вӑл? Салтака

кайнăскере эп кĕтсе пурнаймастăп-и? Е вăл çарта чухне мана савма пăрахать-и?..

— Кун пирки хăвăр иксĕр шухăшласа пăхăр ĕнтĕ...

— Иксĕмĕр...— Таня кун хыççăн чăнах та шухăша кайпăччĕ.— Иосифпа иксĕмĕр...

— Паллах. Унăн авланмалла терĕм вĕт. Е эсĕ урăххине...

Таня ăна çурăмĕнчен лăпкаса илнĕччĕ, унтан, ыталаса тытса, çĕре ӳкеренçи пулнăччĕ.

— Ах, çакна! Пĕтерет вăтантароа...

. Таньăн сулахай енче халĕ шăпах Иосиф утса пырать те. Сцена çинче ташлакан артистăнни пек унăн хул-çурăмĕ. Тап-таса сăн-питлĕ. Хăмăр костюмпа. Шурă кĕпе çухавине çиелтен кăларса янă. Асфальт сарнă тротуарпа мар, çемçе диван çиййĕпе пынăн, килĕшӳллĕн ярăнса утать вăл. Кайсан-кайсан, Таньăна вăл хулран тытасшăн пулни сисĕнет, анчах ку ĕмĕтне çиййĕнчех сирет: те юрать-ха? Таньăн сылтăм енĕпе тепĕр арçын утса пынăран хăяймасть-ши? Е, куççĕпе пăхса, апла тума юраманнине систерет? Уншăн мар пуль, ахăртнех, Иосифăн та хăюлăх çитеймест ăна хулран тытма. Пилĕк çул курман-çке пĕр-пĕрне. Пилĕк çул вăл пилĕк уйăх е эрне мар çав. Уйрăлу çавăн чухлех тăсăласса Кирук тĕлленменччĕ те. Паян та асрах-ха Иосиф Таньăшăн еплерех тунсăхлани...

— Аçта Танюша!?— пăшăрханса та пăлханса ыйтнăччĕ Иосиф Кирукран.

— Яла амăшĕ патне кайрĕ.

— Хă-хăçан килет? К-аламарĕ-и?— Хĕре çав терн курас килнĕскерĕн, чĕлхи те пăртак çыхланчĕ.

— Пилĕк кунтан. Мана çаплах астутароа хăварчĕ, кала Иосифа, терĕ, эпĕ пилĕк кунтан ытла пурнаймастăп, терĕ.

— Унта унăн... мĕн мар-и? Мĕнле шутлатăн, Кирук?

— Ним те «мĕн марри» çук. Сана вăл никампа та улăштармасть. Пĕлсе тăр.

— Чăнах-и, Кирук? Çапла татсах калатăн-и?

— Нивушлĕ ху курмастăн?

— Курма куратăп та-ха. Пилĕк кун еплс кĕтсе пурăнас-ши?— Кăштахран, ассăн сывласа, Иосиф иккĕленерех хушса хунăччĕ:— Сисмен-и эс, Кирук, мансăр вăл кампа та пулин?..

— Анчах каларăм-çке... Ыттисем ун патне çывхарма та хăяймаççĕ. Сансăр пуççăр вăл пĕртен-пĕр Женьăпа çеç ăшшăн калаçать. Е эсĕ ăна та шанмастăн-и?

— Унпа калаçтăр. Ана эп хамран- ытларах шăнатăп.

Женя вăл — Женя. Ун пеккине пурнăçра тупма... Ун пеккипе тус пулни — пысăк телей...

Уитанпа ак — пилĕк çул çитет.

Шăпах унăн — Иосифăн «телейĕ» Таня пырать те халь юнашар.

Женя сарлака та патвар, лутакарах кĕлеткĕллĕ. Мăйĕ хулăн. Пичĕ пăртак шатраллă. Çÿçне кĕскен кастарнă. Кĕске çанăллă кĕпепе. Асфальт çирĕплĕхне тĕрĕсленĕн, урисене васкамасăр шуçтарса, енчен епне кăшт тайкаланса утать вăл. Тÿрĕ пăхать. Иосиф пек, пуçне Таня енне пара- пара илмест. Иосиф пек. Таньăна хулран тытас шухăш пуррн те сисĕнмест.

— Эсĕ мĕскершĕн пиртси пăрăнатăп, Кирук!— кÿренеччĕ Женя темиçе çул каярах.

— Мĕн те-ха... Эсир...— Малалла Кирук: «Эсир ыталанса илтĕр те, çакиа курма аван мар пек туйăнчĕ...»— тесшĕнччĕ. Анчах куна тÿррĕн калама аван мар.

Женя ун шухăшне пĕрех ăнланнăччĕ.

— Санр:ан эпир ним те пытармастпăр. Пĕлес тар. Кирук. Таня мана ыталин, сан пĕрех шăппăн тухса шăвăнмалла марччĕ. Аван мар...

Мĕнех вара, Кирук паян та вĕсемпе пĕрлех тухрĕ стадионран, вĕсемпе пĕрлех утре Шупашкарти тĕп урампа; хале вара вĕсене — виççĕшне — библиотека умĕнчи пысăках мар скверта кăшт маларах ирттерес, тенкел сине ларчĕ.

Калаçчăр виççĕшĕ.

Татăклă сăмах пулмалла вĕсен, çав сăмах хыççăп виççĕшĕн икĕ еннелле уйрăлмалла.

Чăн та, виççĕн кăна мар-ха вĕсем. Виççĕрен иртнĕ Наташа та пур — Таньăпа Иосиф хĕрачи. Хăй ачине. вăл çарта чухне çуралнăскере, Иосиф паян пуçласа курчĕ. Çавăнпа ун аллине пымарĕ те нумай пулмасть виççĕ тултарнă Наташа. Кирук патĕнче вылякалать халь. Картинăллă кĕнеке пачĕç те ăпа... Куыпа сахал Наташăна. Йĕкĕт сарă çулçăсене пĕр çĕререх пухса парать те, ку, вĕсене пĕрерĕн-пĕрерĕн хурса тухса, «пысăк кавир тĕртет».

Хăш еннелле иккĕн кайĕç — вĕсенчен пĕчĕк Наташа та юлмĕ. Пĕччен юлнин вара... Ана куç умĕнче курсан, Кирук кăкăрĕнче самаях пĕçерсе кайрĕ.

Хуллен утаççĕ вĕсем, сквер таврa васкамасăр çÿреççе. Пĕчĕк Наташа мăннисем çак самантра мĕнлерех^ пысак ыйту татса парассине чухламасть те. Кирук пиччĕше ^умрах. Лайăх ăна. Ашшĕпе амăшĕ инçех мар — татах лайах.

• Женьăна вăл ашшĕ тесе йышăнин—пĕчĕкскере каçарапар.

Пăхса ӳстерекене ашше тетпĕр пулсан — йăнăшмасть те пуль. Мĕн тесен те, вăл çутă кун курнăрапиах уншăн Женя хыпкаланать.

Виççĕн...

Кам шутлаиă виççĕшĕ паянхи пек пĕрле, çума-çумăн çӳрессе? Пăх-ха, питĕ те лăпкăп, çав тери килĕштернĕн калаçса пыраççĕ. Анчах çак «лăпкă калаçу» тăвăл умĕнхи шăплăх евĕрлĕ вăл. Мĕншĕн тесеп виççĕшĕн те вăхăт çитсен икĕ еннелле уирăлмалла. Ку вăл пурнăç ирĕкĕ. Пурнăç хистевĕ.

«Пилĕк кун епле кĕтес»,— тесе пăшăрханнă Иосиф пилĕк султан тин çаврăнса çитни. Таньăн ăн-а «куçпа та курас килмен» çĕртех паян стадионра тĕл пулни, çав тĕлпулăва тата Кирука та чĕнни — çамрăк йĕкĕтшĕн пуçа та шăнăçми япаласем пулчĕç. Иосиф ĕмĕтне пĕлсе тăни те тата пушшех те вут çине лартать.

Чухлать Кирук: халь çеç курнă футбол вăййи çинчен пуплеççĕ вĕсем халь, Иосиф хăй мĕнле çитни çинчен калаçа парать ĕнтĕ. Тахçанхи пек шӳтлекелет те пуль-ха. Шухăшĕсем вара хăйсене халь-халь кĕтекеп пысăк татăклă сăмах тавра вĕçççĕ. Ана валли кашниех вырăнлă ыйту, кирлĕ хурав шырать. Çав калаçуран килет вĕсен тĕрлĕ еннелле епле уйрăласси. Икĕ арçынтан пĕрне Таня хулран тытĕ. Ахаль çулпа мар, пурнăç çулĕпе утĕç вĕсем. Пĕри вара тăр-пĕччен тăрса юлĕ...

Таньăна халь пушшех йывăр. Ана çак вăхăтра Кирукăн Урал пилешĕнчен пулăшу ыйтакан хĕрпе — юрăрн хĕрпе— танлаштарас килчĕ.

> Ой, кăтра сямĕе çулçăллă,
> Шур çеçкеллĕ пилеш!
> Ой, пилешĕм, пилешĕмер,
> Ма чĕпместĕп эс...

Юрăри хĕр икĕ йĕкĕтпе, хăшне чуна парам-ши тесе, ăшне вăркатса пырать. Таня — икĕ арçын хушшинче. Пĕриншĕн вăл малтан, чунне ыраттарса, çĕрĕ-çĕрĕпе куç хупман, тепринпе юлашкы çулсенче çывăхланчĕ. Тата — ачп пур унăн, ашшĕ мар арçынна атте тесе чĕнекенскер.

## 2

Строительсен техникумне вĕренме кĕриччен, Кирук çурт-йĕр лартаканссн бригадинче ĕçлекелерĕ. Пурнăçĕ ун Çав тери ăнса пычĕ теме те юрать: çулне тиркемесĕрех (тепĕр уйăхран тин вунултту тултаратчĕ), хул-çурăмĕ тĕрек-

линс кура, илчĕç ăна ĕçс. Общежитис вырнаçтарчĕç, пултарулă та сăпайлă каменщик Василий Топорков çумне çирĕплетрĕç. Ана кирпĕч парса тăрса пулăшмалла, çав хушăрах — каменщик ĕçне вĕренмелле.

Пурнăçĕ ма ăнса пынине тепĕр эрнерен, спорт костюмĕ тăхăннă хĕр хăй патне пырса каласан, пĕлчĕ Кирук. Таня Михеева вăл. Стройуправленири физорг. Ана çак çаврăнăçуллă хĕр çитес вырсарникун пулакан кроса хутшăнма сĕнчĕ, ўлĕм эрнере виçĕ хутчен спорт секцине çўремеллине астутарчĕ. «Эпĕ хăвăрт чупма пултарнине ку ăçтан пĕлнĕ?» — шутлама та ĕлкĕреймерĕ Кирук. Таня, чсен кулса илсе, ăшшăн ыйтрĕ:

— Мана таçта курнăн туйăнмасть-и? Пăх-ха лайăхрах.— çăмăллăн çаврăнкаласа илчĕ хĕр.

— Çу-ук... Астума-астăп...

Таня ун çывăхнерех пычĕ. пуçĕнчен аллипе икĕ хутчен ачашшăн сăтăрса ыйтрĕ:

— Иртнĕ çуркунне Çĕмĕрлере кросс пулчĕ. Унта сана, пилĕкçĕр метра чупса мала тухнăскере, кам çапла ачашларĕ?

— Астума-а-астăп...

— Ёненетĕп. Амăртура мĕнпур вăя хуратăн та—вăхăтлăха ним курми-илтми пулатăн... Эп сана лайăх астуса илтĕм. Иртнĕ эрнерс хамăр СУ кантурĕнче куртăм та — тўрех кадрсеп пайне кĕтĕм. «Пире кирлĕ çын—ним тиркемесĕр йышăнăр!»—терем. Куçне илмерĕ йĕкĕт çинчен Таня.— Итлерĕç мана... Хĕрелсе, пуçна пăркаласа ан тăр. Хатĕрлен кроса хутшăнма. Управленири сборпăй командăаа ним мар лекме пултаратăн эс. Кăçалах, Паллах, ху тăрăшсан, мана итлесен.

— Сана?..

— Мана çав. Хамăр управленирс физкультурăпа спортшăн ответлă эп. Еçлеме кантуртах, план пайĕнче, ĕçлетĕп. Кирек хăш вăхăтра пыма пултаратăн. Акă мĕн тата...— Таня, темле шухăш тытса, чўречс патнс утса кайрĕ, хыпăнчăклăн тулалла тинкерчĕ.— Эй. ку ачапа! Халĕ те килмест вĕт,— терĕ кăштахран. Унтан шкап патĕнчи кравать снне пуç сулса ыйтрĕ.— Аçта çухалса çўрет-ха вăл? Хăçан йĕркене кĕрсе çитет?

— Иосиф-и?

— Иосиф çав! Урăх кам пултăр! Хăйсен бригадинче кăнтăрла гимнастика тутаратăп тесе шантарчĕ. Нихăшне те курмастăп-ха гимнастикăра. Ахаль ларин лараççĕ. гимнастика тумаççĕ. Э-эй!—аллине лаш сулчĕ Таня.—Пулать те этем! Пуш параппан. Ан кўрен, Кирук, сан пирки мар

эп. Ак ҫакан пирки,— хӗр каллех Иосиф кравачӗ çинелле пуҫне сулчӗ,— кӑштах хӑть йӗрне-майне пӗлесчӗ. Унашкал ан пул эс, Кирук, унашкал пуш сӑмахпа ан перкелеш. Уйрӑмах — хӗрсем умӗнче. Килӗшрӗмӗр-и? Кӳр -аллуна!— аллине тӑсрӗ вӑл.— Э-эй. мӗн пӑрӑнатӑн ҫак? Е эсӗ манпа килӗштерсе пурнасшӑн та мар-и?

Кирук аллине пӑчӑртасан, хӗр ӑна кӗске ҫӳҫӗнчен икӗ хутчен шӑлчӗ: «Улӗм те сана ӑмӑртусенче ҫапла ачашламалла пултӑрччӗ».

Кирук вӑтаннине асӑрхамарӗ Таня.

«Эй, ача! Мӗн шухӑш тытрӑн эсӗ, Кирук! Веренмелле тетӗн?.. Вӗренессине кам хирӗҫ. Кӑмӑлу пур — верен, малалла кай. Анчах та пире пӑрахса ан хӑвар эс. Хамӑр стройуправленире сборнӑй командӑна кӗртрӗмӗр сана. Кӗҫех пысӑк ӑмӑрту пулмалла. Эсӗ, тен, трестра та- мала тухӑн, кӑҫал ҫӗнтермесен те, ҫитес ҫул ҫӗнтеретӗнех. Пуҫна ан пӑркала, шӑллӑм. Эпӗ, Таня Михеева физрук, чупакансисксенсен тренере, ҫапла ҫирӗплетсех калатӑп. Ӗненместӗн-и мана эс, Кирук? Ма чӗнместӗн? Кала тӳррӗн, мана ӗненетӗн е ӗненместӗн? Темле ҫав тен? Мӗн «темли» пултӑр унта? Эпӗ сана шанатӑп, санӑн мана ӗненмелле. Килӗшрӗмӗр-и? Апла пулсан. кил ҫывӑхарах, ыталам пӗрре сана куншӑн... Тӑван шӑллӑм пекех эс, Кирук. Шӑллӑм ҫук манӑн. Анчах та пурне те шӑллӑм пур тесе калас килет. Вӑрҫмастӑн-и куншӑн? Астунӑ пул. Ҫӗмӗрлери кросра пӗрре курсах килӗштертӗм сана. Мӗншӗнне хам та пӗлместӗп. Мен каллех хӗрелсе кайрӑн эс, аппӑшӗ умӗнче хӗрелеҫҫӗ-и ӑна? Аппӑшӗнчен канаш ыйтаҫҫӗ, аппӑшне пулашассе. аппӑшне итлеҫҫӗ... Чӑнах та, вӗренес шухӑшна ан парах тата эс, стройтехникума каҫхи уйрӑма кӗр. Топорков сана лайӑхпа ҫеҫ асӑнать. Ҫитес уйӑхсенчех разряд пама юрать тет. Ан ҫиллен те, хӑвӑр бригадӑри каменщиксене производство гимнастикине хутшӑнтармасӑр та разряд партармастӑп сана. Пӗлсе тӑр. Малтанласа хӑть вуннӑн, хӑть ҫиччӗн-саккӑрӑн гимнастика тӑвӑр. Кӑнтӑрла. Хулҫурӑм ыванса ҫитсен. Агшанмастӑп, мӗнле-ха вӑл ӗҫре гимнастикӑсӑр пурӑнмалла? Иосиф, ав.ултӑ уйӑх шантарать ӗнтӗ мана, гимнастикӑна ҫӗр те пӗр процент явӑҫтаратӑп тесе.

Юрататӑп вӗт-ха эпӗ ҫав мура... Эй, санпа! Мӗн эс каллех хӗрелетӗн, аппӑшӗ йӗкӗте юратнӑшӑн шӑллӗн вӑтанмалла-и? Ман хамӑн вӑтанмалла. Ҫавнашкал сӑмах тытмансерсех юратнӑшӑн...»

Иосиф Канечкина, профтехучилище пĕтернĕ хыççăн каменщикра ĕçлекенскере, вĕçкĕнлĕх те килĕшет иккен. Хăйĕнчен сивĕтмен, усал шухăшлаттарман вĕçкĕнлĕх унăн.

— Пирĕн чухлĕ нихăш бригада та çурт лартман ку çурçуллăхра,— мухтанма пуçларĕ вал каллех,— хуть укçапа, хуть кубометрпа виç, пирен çитеймесçĕ. Атя, Женя, куç ман пата, вара эсĕ те çĕнтерӳçĕсен йышне кĕрĕн. Эсĕ те малтисен ретĕнче пулăн.

Женя Колесов, крановщик, иртнĕ эрнере çеç вĕсен пӳлĕмне вырнаçнăскер, нимех те чĕнмест. Шухăшласа ларать.

— Темех пуç ватмалли пур-ши ĕнтĕ?— тэтах ӳкĕтлерĕ Иосиф,— кайса ячĕç те сана вăтамран-вăтам бригадăна — çӳрен лăпчăнса. Тăнла эс, сан пек пултаруллă механизатор вырăнĕ пултаруллă ĕçченсем патĕнче. Ну, пирĕн пек бригадăра эппин. Арă, Кирук лекрĕ лайăх йышэ, лайăх ăстаçă патне — мĕнлерех каçăрăлса çӳрет халь. Пэтне ан пыр.

Кирука кунашкал сăмах килĕшмерĕ.

— Хăçан каçăрăлнă эп?

Иосиф аптранипе аллисене саркаларĕ, пуçне пăркаларĕ.

— Ак санэ майна-вирна! Мĕншĕн-хэ эппин каçăрăлса çӳрместĕн? Виççĕмĕш разряд пачĕç, чупэкэнсен ăмăртăвĕнче мэлэ тухан, каçсерен техникумра вĕренетĕн... Юрĕ, кусем темех мар тейĕпĕр. Таня та мухтакалэть сэнэ. Таила, ачам-ачамкă, Таньăнэ тэ килĕщнĕ эс. Таньăна килĕшме — ай-вай! Техникума кĕнинчен, разряд ӳстернинчен тем чухлĕ йывăртарах ку. Хыт тăрэшсэн, сэлтака кайичченех хула чемпионне ятне илтме пулать, çав тери йĕркеллĕ пурăнсан, сăмах каламасăр пĕр пуху таирттермесен — иквиçĕ султан ним мар прораба çитетĕн. Таньăна килĕшме вара — ай-вай... Йывăр ĕç ку, ачамка!— Иосиф Кирук патнерех таплэттэрсэ пычĕ.— А эсĕ, мэйнэ-вирнэ, Тэньăна килĕшнĕ çĕртех пуçна пĕксе çӳресшĕн-им?

Чылай хушă шăппăн ларнă Женя тинех сăмах хушрĕ:

— Эхе, кĕвĕçетĕн иккен?

— Кĕвĕçетĕп пулсан тата! Манпа Таня виçĕ минут та калэçсэ тăмасть. Кирукпа çĕр çĕрлеме хатĕр, кĕрсе кэятăп пĕррехинче пӳлĕме — эк япала! Хăть куçэ хупла... Пĕлетĕн-и, Женя, вăл Кирука çăтăрр ыталанă, чутах çурăлса каймарăм.

Женя ури çине тăчĕ, пăтарэн çэкнă гитарине илчĕ.

— Çитет сана ачаран тăрăхлэма,— терĕ хуллен.

— Тăрăхламастăп эп,— хĕрӳленсех калэçрĕ Иосиф,—

кала. Кирук. ним чухлӗ те суймастӑп вӗт, сана Таня пӗркун ыталарӗ вӗт?

Кирук пуҫне ҫӗклерӗ:

— Шӑллӗ вырӑнне хурса ыталарӗ вӑл мана. Пӗлессӳ килет-тӗк, вӑл... вӑл — сана юратать, Иосиф. Хӑй каларӗ,— терӗ вӑл хӑюллӑн.

Ку сӑмаха персе янӑшӑн кайран чылай ӳкӗнсе пурӑнчӗ Кирук. Хӗр ӑна шанса, вӑрттӑн туйӑмне, чӗре патӗнчине уҫса пачӗ пулать те — вӑл авӑ персе ячӗ.

Пӳлӗм самантлӑха шӑпланчӗ. Женя аллинчи гитара чӗркуҫҫи ҫине сас парса ӳкрӗ. Иосиф хытса тӑчӗ. Ҫакӑ мӗне пӗлтернине Кирук халлӗхе чухлаймарӗ. Кун хыҫҫӑн Иосиф ӑна «сана Таня ыталать» тесе тӑрӑхламӗ ӗнтӗ' тесех. Ҫапла ан тӑрӑхлатӑр тесех, Таня ӑна юратнине систерчӗ те вӑл.

•— Чӑнласах-и?— ыйтрӗ Иосиф кӑштахран.

— Мана ӗненместӗн-тӗк. Таньӑран хӑйӗнчен ыйт. Катара пурӑнмасть.

Иосиф кӑмӑлӗ тулса тӑкӑнас пек. Каччӑ чӑнах та хӑй тӗлӗннине начах та пытармарӗ.

— Апла... Мӗншӗн-ха манран, «пуш параппан» тесе, вӑрт ҫеҫ уйрӑлса каять?

— Бригадӑра производство гимнастики тутарма сӑмах паман-и эс?— ыйтрӗ Кирук, калаҫу кунашкал йӗрпе пӑраннӑшӑн ни савӑнма, ни тӗлӗнме пӗлмесӗр.

Иосиф пӗҫҫине ҫапса илчӗ. Пуҫне пӑркаласах калаҫрӗ: пӑх-халӗ, тахҫан калаҫнине те манмасть хӗр. Тӗрӗссипе ӗнтӗ, «пуш параппан» темелӗхех кахалланман вӑл, гимнастикине пуҫланӑччӗ-ха бригадӑра, шашкӑпа шахмат турнирне те ирттернӗ. Юрӗ, ыранах вунпӗрсенче пурне те аялти хута пухӗ: «Итлӗр те мана — манашкал туса пырӑр, пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ! пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ. Ан пӗкӗрлӗр (урӑрсене ҫӳлерех ҫӗклӗр! Пӗрре, иккӗ, виҫҫӗ...» Тен, музыка пирки те мӗн те пулин шухӑшласа кӑларӗ. Ан тив, Таня унпа кӑмӑллӑ юлтӑр, пуш параппанне асӑнма пӑрахтӑр... Унтан каллех вӗҫкӗнленме пуҫларӗ: Таня вӗсен бригади мӗнле ӗҫленине, тухӑҫлӑхпа мӗн чухлӗ материал перекетлени таранах, хӑвӑрт шутласа парать. ахальтен мар иккен ку, ҫапла, ахальтенех мар. Мӗншӗн-ха тепӗр тесен тата унӑн Таньӑна килӗшмелле мар? Сӑн-пуҫпа катӑк-и, спорт ӑмӑртӑвӗнче намӑс курать-и е ӗҫре вӑр-варлӑх, хастарлӑх сахал-и унӑн?

Ҫӗкленӳллӗ кӑмӑлпа тухса кайрӗ вӑл пӳлӗмрен. Таньӑсем тӑваттӑмӗш хутра пурӑнаҫҫӗ. Унта мар-ши?

«Эй, ача! Эс, Кирук, йӗкӗтсене те пӗлтернӗ-ҫке ман

вăрттăнлăха. Мĕнле вăрттăнлăх тен? Ара, эпĕ Иосифа, вĕçкĕнскерсех, юратнине. Систерессшĕн марччĕ эп, малтан вăл улшăнтăр тенĕччĕ. Каçăрăлса çӳреме пăрахтарасшăиччĕ. Ара, унăн анчах-им спортпа иккĕмĕш разряд? Вăл анчах-им трестăн сборнăй командинче? Лайăх камenщик та Канечкин çеç мар. Эсĕ ху та, акă, вăхăчĕпе унран юлмастăн. Пĕлсех тăратăп, Кирук шăллăм, унран ирттерĕн те. Асту, вăл профтехучилищĕрс ятарласах камсншика вĕреннĕ, эсĕ вара — Топорков çумĕнче вĕренетĕн. Уйрăмлăх çук мар... Тĕрĕс ăнлан-ха мана, сана эп вăрçасшăн мар пачах та. Каланă—каланах пултăр. Пуçĕ пур-тăк, эп ăна юратнине хăех сисме кирлĕччĕ. Эсĕ пĕлтернĕ хыççăн мар... Ухмах! Пычĕ те: «Эп те сана юрататăп!»—тет хайхискер. Вал мана килĕштернине хам курмастăп пек. Э-э, чĕлхе сине килнĕ чухне пĕлтерсех хурам-ха тата: трестра çамрăк каменщиксенчен чи лайăххи ятне илессишĕн ăмăрту пулать. Пит интереслĕ ăмăрту. Палăртса хунă кирпĕчрен стена хăпартмалла, вара пахалăхпа ĕç калăпăшне виçеççĕ. Çавна кура ăмăртури вырăна палăртаççĕ. Топорков унта сана та хутшăнтарасшăн. Пултаруллă та вăр-вар эс тет. Атя, хатĕрлен... Савăнтартăн мана, Кирук шăллăм, çав тери савăнтартăн. Топоркова куртăм паян, ну, кăнтăрласенчехуçкаланатпăр, авкаланатпăр та, тет, каплах тăрăшсан стройкăран стадиона куçарса кайĕç пире, тет., Кил. ыталам сана, куншăн. Мĕ-ĕн? Иосиф курма пултарать тен? Аппăшĕ шăллĕне ыталани усал ĕç-им, юрăхсăр ĕç-им? Çакна та ăнланмасан. йĕркеллĕ, ăслă-пуçлă йĕкĕт теме пулать-и Иосифа. Тивĕçлĕ-и çав этем пирĕн шанăçа, Кирук шăллăм».

3

Общежитире студентсем концерт кăтартнă хыççăн Иосиф кĕнеке вулакан Кирук патне пырса ларчĕ.

— Мĕнле, килĕшрĕ-и?— ыйтрĕ вăл, самай пăлхаинăскер.

— Вуласа тухаймарăм-ха.

— Ак сана майна-вирна! Леш, пĕччен ташласа юрлакан хĕр пирки ыйтатăп эпĕ. кĕнекӳ çинчен мар.

— Ташласа юрлакан хĕр?— шалтах тĕлĕнчĕ Кирук,— вăл... мĕн тума...

— Эй, санпа! Ĕç, тренировка, техникум, кĕнеке — мĕнле пурнăç санăн ку? Çав...— хулленрех калаçрĕ вăл унтан.— Çав студенткăна, кĕске çивĕтлĕскерс, астуса та юлмарăн-и?

— Астăватăп, лайăх ташлать, лайăх юрлать.

— Кун пирки те мар эп. Мĕнле-ха ăнланса ҫитейместĕн мана?— Иосиф аллисемпе хĕр кĕлеткине туса кăтартма хăтланчĕ.— Килĕшмерĕ-и теп? Сере чипер.

Ним калама аптранă енне Кирук пуҫне сулса илчĕ. Вара... Мĕскер илтет вăл Иосифран? Ҫав студентка ăна питĕ килĕшнĕ пулать те, вăл пăртак иккĕленет иккен: Иосиф ун патне пырас пулсассăн — студентка унран пăрăнмĕ-ши? Иосиф ăна куҫран ăшшăн-ăшшăн пăхса ҫунатчĕ-ҫке, концерт хыҫҫăн Таня оасартăк килĕшми пулчĕ. Чĕрине студентка вут-ҫулăм хыптарнă-им? Мĕнле ăнланмалла Иосиф сăмахне?

Кирук шухăшне снесен, Иосиф калаҫăва урăхларах ҫулпа чуптарчĕ. Ҫук-ҫук, ахаль ҫеҫ тапратрĕ ҫак сăмаха вăл. Таня патнех чун туртать, халĕ те акă вăл хăҫан ыран ҫитĕши тесе ларать. Ыран вĕсем Таньăпа иккĕшĕ кинона каяҫҫĕ. Ташласа юрлакан студентка-и? Ахальтен ҫеҫ аса илчĕ ăна Иосиф. Интерессшĕн, хăй ун патне ыр кăмăлпа пырас пулсан, мĕнлерех йышăнассине пĕлме. Ҫавăнпа ҫеҫ тапратрĕ. Таня хăлхине ан ҫиттĕр тата ҫак калаҫу...

— Леш студентки, мĕн кала та, чипер вĕт. Э-э, Кирук,— тӳсеймерĕ вал тепĕр хут сăмах хушмасăр.

Ҫамрăк каменщик шарламарĕ. Иосиф ҫапла калаҫкалани килĕшмерĕ ăна. Ҫапах та кăмăлне палăртмарĕ: вăл та ăна тăван шăллĕ вырăнне хурсах хисеплени, кирлĕ чухне пулăшнн тытса чарчĕ. Чăн та, тепĕр куннех, Иосиф Таньăна ăшă кулăпа кĕтсе илнине курсан, кăмăллăн ҫапла шухăшларĕ: «Акă вăл пĕр-пĕрне тивĕҫлĕ мăшăр, юрра кĕмелли юрату...»

— Атя, Женя, пирĕнпе,— сĕнчĕ Иосиф, крановщик пуҫне пăркаласан, вăл ҫумри хĕре хăтăранҫи пулчĕ:— Кирек кама та ӳкĕте кĕртме пултаратăн эс, Танюша, такама та нтлеттерстĕн. Сана итлессех, акă, пирĕн Кирук стройуправленире чаплă ҫынсен йышне кĕрет. Анчах та мĕншĕн Женьăна пĕр-пĕр чиперкке тупса памастăн, э-э, Таня?!

— Сăнакалатăп-ха, ҫине тăрсах шыратăп. Тупсанах ҫавăтса килĕп. Хатĕр тăрăр.

Хĕрĕпе Иосиф хаваслăн ахăлтатрĕҫ. Кирук та кулчĕ. Анчах Женя сăн-пичĕ тĕксĕмленнине курсан, пурте шăпланчĕҫ.

Тĕлĕнмелле, хăш вăхăтра е хăш калаҫуран ҫав тери туслашнă Иосифпа Женя? Пĕр пӳлĕмре пурăнсан та, ҫакна сисеймесĕр юлчĕ Кирук. Тĕрĕссипе, вĕсене ҫыхаканни те пĕртен-пĕр спорт ҫеҫ темелле. Ни ăс-хакăлĕ, ни интересĕтĕллевĕ пĕрешкел мар вĕсен, пурнăҫ ҫине те ăрасна

пăхаççĕ — анчах туслăхĕ иксĕлми. Нимскер картлайми çăлкуç пек.

Тепĕр тесен, ăмăртусенче те пĕрле пулаймаççĕ вĕсем: Женя Колесов штанга çĕклесе вăй виçет. Иосиф волейболла вылять, кĕске дистанцисене чупса ăмăртать. Çавăншăнах ăна Спринтер ят хучĕç те. Кансчкин тесен, общежитире пурте пĕлсех те каймаççĕ кам иккенне. Спринтера вара кунта пурте пĕлеççĕ.

Иосиф çамрăк, салтак ячĕ тухнăскерс çулталăка хăварнă. Çитес кĕрте çара илсе каяççĕ пулас; Женя вара çартан килчĕ стройкăна. Салтака кайиччен ĕçлесе пурăннă çĕрех вырнаçрĕ. Кирек ăçта пулсан та, Иосифăн «хăш хĕрĕ чипертереххине» сăнасси йăлара пур. Женя ун пек мар. Пур-и хĕрсем, çук-и — уншăн пурпĕрех тейĕн. Çакна хăшĕсем ак мĕнле ăнлантарчĕç: ашшĕ ун çар çынни, амăшĕ, упăшки пур çĕртех, урăххине качча тухса тарнă. Женя, ашшĕпе пĕрле пурăнса ӳснĕскер, çавăнтанпа хĕр-хĕрарăмсене тӳсме пултараймасть. Ашшĕ унăн текех урăх авланман. Тĕрĕсех-ши ку е ӳстерсе калаççĕ?.. Чăнах, пĕррехинче ун патне пĕр подполковник кĕрсе тухрĕ. Анчах ăна Женя «кукка» тесе чĕннĕччĕ пулас, «атте» тенине Кирук илтмерĕ. Ун пек-кун пеккиссне хăйĕнчен ыйтма аван мар. Тепĕр кунсенче Женя самай вăхăт шухăша кайса ларнине, никампах та калаçманнине кура, пурнăçĕнче унăн темскер чĕмсĕрлетекенни, çынсенчен ютшăнтараканни пулса иртнине тавçăрма тавçăратăн-ха. Ыттине вара... Ахальтенех гитарăпа та тунсăхлă та, тахăшне тем каласа ăнлантарнă евĕрлĕрех кĕвĕ-юрăсем шăрантармасть пуль ĕнтĕ. Çапла, кĕвĕ-юрăсене те вĕсем тĕрлисене кăмăллаççĕ. Иосифăн кулса ахăлтатман, ĕçрипе е ăмăртурипе мухтанса илмен кун та çук. Женя пĕртен-пĕр Иосифпа калаçнă чухне кăна, лешĕ пит вырăнлă шӳтлесен, кулса кăтартать. Сайра хутра унпа пулленĕ чухне хăй те шӳтлекелет. Ыттисенчен нихăшĕ те ăна калаçтарса яраймасть. Ĕçĕнче, тен, апла мар пуле те — общежитире çавнашкалах. Тепĕр тесен, стройкăра крановщикăн çынсемпе калаçма майĕ те çук. Пĕтĕмпе те икĕ сăмах илтет вăл яра кунĕпе: «майна» е «вира». Стройкăри чĕлхе çине куçарсан, «çӳлерех» е «аяларах» тени пулать ку.

Чăн та, Таня пӳлĕме килсе кĕрсен, Женя кăштах хаваслăннăн туйăнать. Пĕрех унпа та калаçăва хутшăноах каймасть. Кăшт хавасланни çывăх юлташĕ савниййĕпе тĕл пулнăран килет-и, тен. Иосифа вăл яланэх ыр тума, хӳтĕлеме тăрăшать мар-и, ара.

Кĕçĕр те, акă, вунпĕр иртсен урама пуçтарăнчĕ вăл:

Таньăпа пĕрле кинона кайнă Иосиф халь те таврăнман та, çул çинче темĕн сиксе тухман-ши тесе пăшăрханчĕ.

Вуниккĕсем иртсен тин таврăнчĕç вĕсем. Таня хăйсен пӳлĕмне улăхнă ĕнтĕ. Çӳхе пушмакпа, плащпа çеç тухнă Женя. Вăл шăл шаккамаллах шăннăскер, ним чĕнмесĕр хывăнса, утиял айне чăмрĕ.

...Таньăпа Иосифа вăл урамран урама чупса шыранă. Пĕр тăкăрлăкра такамсем, самай хĕрĕнкĕскерсем, талпас çапма пуxăнса тăнă-мĕн те, калаççан-калаççан, чĕрре кĕрсе, хирĕçме-тӳпкелешме тытăннă. Юлташне патак çитермеççĕ-ши тесе, вĕсем патнех чупса пынă Женя, лешсене мирлештерме хăтланнă, ну, паллă ĕнтĕ кун пек чух, хăйне те чышкă лекнĕ...

Çав вăхăтра Таньăпа Иосиф, тем сăлтавпа çур çĕре урамрах кĕтсе илме сăмах татнăскерсем, общежити ,айккинчи йывăççем айĕнче васкамасăр утса çӳренĕ. Лайăх тумланнăскерсене сивĕ мар. Кăмăлĕсем ырă. Хăр плащ вессен çеç урама тухнă Женя вĕсене хыпăнчăклăн шыраса çӳресе тĕлленмен те. Ырă ĕмĕт-туйăмпа тулнăскерсем, хăйсен савăнăçĕпе юлташĕн канăçне çухатасси пирки шухăшлама та ерçмен. Чылай вăхăтран тин общежити патнелле пăртак тайкаланарах утса килекен арçынна ясăрхаççĕ; Таня, Иосиф ытамĕнчен вĕçерĕнсе, хыпăнчăклăн пăшăлтатать:

— Эй, ача!.. Пирĕн Женя вĕт ку?!

— Женя-я?!— шалтах тĕлĕнет йĕкĕт,— пулма пултараймасть! Ак сана майна-вирна! Мĕн туса çӳрстĕр вăл çĕрлехи урамра? Чим, вăл манран пӳлĕмрех юлчĕ-çке. Лайăх астăватăп — пӳлĕмрех юлчĕ. Урăх çын пуль ку, Женя пекрех утаканскер.

— Çук, пирĕн Женя вăл. Атя, тухар умне. Усал япала сиксе тухман-тăк юрĕччĕ.— Хĕр каччă умне чупса тухать, ăна палласа илсен вара кăшкăрах ярать:— Женя! Женечка! Мĕн пулчĕ, ăçтан килетĕн?!

Иĕкĕт Таньăна курсан, пăшăрханнине пытараймасăр ыйтать:

— Иосиф та пур-и?.. Э-э, кунтах-иç,— тинех çăмăллăн сывласа ярать,— эп сире... Мĕн тесе... Килместĕр те килместĕр...

Таня тĕлĕнсех каять, калаçайми пулса тăрать.

— Женя... Ой. Женечка...— тет вăл кăштахран,— мĕнле-ха эс капла пит çӳхе тумланнă... Шăнса пăсăлатăн вĕт...

Колесов текех шарламасть. Юлташĕпе ун савнă хĕрĕ инкеке лекмен, тĕрĕс-тĕкелех çӳреççĕ ав — урăх мĕн

Калаçмалли? Часрах пӳлĕмс çитсе ăшăнас. Çывăрма выртас. Ыран çичĕ сехетре унăн башньăллă крайне, чун кĕртсе, ĕçе кӳлмелле.

Таньăн ăна ыталаса илсе ăшăтас килсе кайрĕ. Теприне, калăпăр, Кирука пулсан-и, çаплах тăватчĕ пуль. Анчах та халĕ ăна ăшăтма мар, ăшă сăмах та калама ăс çитмерĕ. «Мĕн тери ырă чунлă çын иккен вăл. Пӳрле шыраса çĕрлехи урамсем тăрăх çӳренĕ вĕт»,— шухăшларĕ хĕр.

Иосиф çаплах-ха нимĕн те ăнланмарĕ. Женя çĕр хута ăçта кайнинe, мĕншĕн плащпа çеç тухнине иккĕмĕш хут ыйтрĕ.

— Çак вăхăтра эс тĕлĕк курсах çывăратăн пуль тесеттĕм — терĕ вăл, тĕлĕнмe пăрахмасăр,— ăçта кайнине ма шарламастăн? Вăрттăнлăх-и ку? Юлташран нимле секрет та пытармалла мар пек. -

Таня Иосиф тӳрккеслĕхĕшĕн пăшăрханса илчĕ. Мĕн, Женьăн ăна: «Час килмерĕр те, сире шыраса тухрăм»,— темелле-им? Чăмлак хыптарнăпа пĕрех ку.

— Атьăр часрах киле!— васкатрĕ вăл, Иосифăн ниçталла мар сăмахне часрах пăрас е татас тесе,— çывăрманни те эпир çеç юлнă ĕнтĕ. Вахтертан лайăх мар...

Пӳлĕме килсе кĕрсен те, ак, Иосиф паçăрхи калаçăвах хускатрĕ. .

— Ним те ăнланмастăп. Аçта çӳрерĕн кĕçĕр эсĕ?

Женя ыйха путрĕ-ши е калаçасси килмерĕ-ши — сăмах чĕнмерĕ.

4

Колесов, ĕçрен таврăннăскер, гитара тытрĕ те хуллен, чуна пырса тивмелле юрла пуçларĕ:

Все для тебя, дорогая,
Я тебе все дарю,
Но вот только не шляпу,
Сам без фуражки хожу...

Кирук ăна сывламасăр тенĕ пек итлесе ларать. Шăпах çак юрăра мар-ши чемсĕрлĕхĕ, çынсенчен, уйрăмах хĕрсенчен ютшăннин сăлтавĕ.

Иртнĕ кунсенче Женя пирки вăл урăхларах калаçнине илтрĕ: çара кайиччен йĕкĕт пĕр хĕре савса, унпа салтакран таврăнсанах пĕрлешме сăмах татнă иккен. Çитет Женя çаврăнса — ак тĕлпулу! Савнийĕ ăна пĕччен мар, виççĕн кĕтсе илет: упăшкипе тата кăкăр ĕмекен ачапа. Аçтан ăшшăн пăхтăр-ха çакăн хыççăн Колесов хĕрсем çине.

Женя тепĕр юрă çине куçрĕ. |

...И все блондинки улыбались,
Когда в пивную он входил...

Женьăпа тата Иосифпа пĕрле пĕр пӳлĕмре пурăннăшăн Кирук хăй шăпинс тав тăвать. Перле ан пурăн — пурнăçри нумай-нумай япалана пĕлейместчĕ вăл. Çирĕп туслăх, икĕ арçын туслăхĕ мĕн тери хăватлине кураймастчĕ. Общежитири чи хитре хĕр Таня та унпа çывăхланмĕччĕ.

— Эс, Кирук, мĕнле-ха çавнашкал чиперккепе ирĕклĕн, ним вăтанмасăр калаçма хăюлăх çитерстĕн?—тĕлĕнеççĕ тепĕр йĕкĕтсем.— кур-халĕ тата, сан пата хĕрех ярăнса пырать вĕт, мĕнле ăшшăн, кулса калаçать тата санпа. Эп хам пулсан-и? Ун çывăхĕнче сывлама та хăраса тăрăп.

Тĕлĕнччĕр те ăмсанччăр. Таня ăна тăван шăллĕ вырăнне хурсах килĕштернине каласа çӳреме Кирук айван ача мар. Вунсаккăра кайрĕ ĕнтĕ. Топорков бригадинче ăна çамрăксем комсорга суйларĕç. Трестри çамрăк каменщиксен ăсталăх конкурсĕнче иккĕмĕш ырăна тухрĕ. Таня каларăш, хăйĕн те «савни тупма вăхăт» ĕнтĕ. «Вăхăчĕ» çитнĕ пуле те-ха, анчах савни валли ерçӳ çук-çке çамрăк йĕкĕтĕн. Ĕçрен — техникума, техникумран — общежитие... Спорт тренировки, ăмăртусем... Унашкал ерçӳсĕрри хĕрсене пит кирлех пуль?

— Кирук, чăвашла юрă вĕрент-ха,— сĕнчĕ Женя, гитарине аллинчен ямасăр.— Чăвашсен тĕп хулинче пурăнса та чăвашла юрă пĕлместĕп. Намăс.

Етĕрне енчи ырăс вăл. чăвашла хăш сăмахсене ăнланкалать. Анчах юррах ăçтан вĕренĕн?

— Халăхри юрра, пĕр-пĕр... Ну, чунлăраххине, шухăш пуррине,— хăй сăмахĕнчен чакмарĕ Женя.

Кирук пăртак шухăшларĕ те тăван ялти хĕрарăмсенчен илтнĕ юрра хуллен юрларĕ.

Вĕç-вĕç, куккук, вĕç, куккук,
Вăрман хĕрне çитиччен.
Вăрман хĕрне çитсессĕн,
Юман çине ларса кан.

— Чим, кĕвви пит хӳхĕмскер,— ырларĕ вăл юрра,— халь атя иксĕмĕр пĕрле гитара кĕввипе юрласа пăхар. Весь, весь, куккук, весь куккук... Малалла мĕнлеччĕ-ха? Ворман хĕрне-е-е сити-и-иччен...

Алăка шаккани вĕсен юррине чарса лартрĕ. Иосиф мар ку, паллах. Шаккаса кĕресси йĕкĕтсен йăлинче çук.

Таня иккен. Пĕччен мар. кăн-кăвак свитер. кĕске юбка тăхăннă, хăйĕнчен кăшт лутрарах, анчах сăнĕ-пуçĕпе хăй пекех илемлĕ хĕрпе. Куçĕсем хайхи хĕрĕн йăл-ял ялкăшаççĕ

кăна. кусри çулăм тути патне те куçрĕ ак — хĕп-хĕрлĕ, çутă. Тулли пӳ-силлĕскерĕн пилĕкĕ çинçе, Таньăнни пскех. «Асту, ку йĕкĕтсем умĕнче сан хăвăн çивĕчрех пулмалла»,—тесе астутарнă пулас хайхискере Таня. хăюллăн малалла иртрĕ. Ашшăн сывлăх сунса, Женя çине чăрр! пăхрĕ. i

— Каччăпа паллаштаратăп терĕн те эс, Таня. кая юлтăн,— пăртак чĕтрекен сасăпа калаçма та пуçларĕ вăл,— сирс эп паллатăп. Женя Колесов эсир. Халь тăххăрмĕш позицире кранпа ĕçлетĕр. Иăнăшмастăп-и?

Женя ним чĕнмесĕр пăхса ларчĕ. Гитарине кравачĕ çинс хучĕ. Хайхи чиперкксне «ни лар, ни паллашатăп» темерĕ.

— Апла...—хавасланчĕ Таня,— эсĕ те. Женя, ăна паллатан пуль. Пĕр-пĕрне пĕлекен çынсенех паллаштарма хăтлантăм пулать-и-ха эп?

Колесов каллех чĕнмерĕ. Кунашкал аванах мар вĕт-ха. Хăнана килнĕ çынна хапăллас пулать. Калаçмалла унпа. Çавăнпа Кирук хĕре пукан шутарса пачĕ. «Ларсамăрччĕ».— терĕ çемçен.

— Рена ятлă вăл,— сăмах хушрĕ Таня. Кирук çине ырласа пăхса.

— Ларăр, Рена, килти пек пулăр,— терĕ вара çамрăк камсншик,— тирпейĕ çук та, ан тиркĕр ĕнтĕ.

Таня та хĕре ларма сĕнчĕ. Женьăна калаçтарса ярайман пирки, урăх ним сăмах çукран, вăл Кирука кăштах «характеристика парса» шăплăха татас терĕ, ачи ку çамрăк пулин те, çав тери маттур иккенне. ăна кирек мĕнле ĕç те шанма май пуррине пĕлтерчĕ: юрать-ха çакна общежитири хĕрсем сисмеççĕ, аттук ăна коридорпа та утса çӳремс памĕç, кунта та йăркка пуçлĕç. Таня йĕкете ырласа калаçнине итленĕ чухне Рена Кирук çине йăл-ял çиçкелесе пăхрĕ.

Таня кунта мĕншĕн килнине самантлăха та асран кăлармарĕ. Кирука мухтанă чух та Женя çине куç хӳрипе пăхса ларчĕ. Рена çамрăк камсншикпа калаçкаланă хушăра та ăна паçăрхи шухăш канăç памарĕ: мĕнле паллаштарас Ренăпа Женьăна?

— Женя,— терĕ вăл уççăн,— мĕн эс чĕнмесĕр ларатăн? Паллаш Ренăпа. Хамăр енчи хĕр, икĕ çул пĕрле çӳретпĕр. Штукатурсем патĕнче мастерта ĕçлет.

Колесов кăнн! пăхрĕ Таня çинс.

— Халь тин-и? Эсĕ ун çинчен йăлтах пĕлтерсеттĕн вета,— терĕ вăл.

— Çук-ха, йăлтах мар,— шӳтлемс хăтланчĕ Таня,—

тусăм ман нимле каччăпа та çÿремест. Кашни эрнекун тăван яллне каять, тунтикун ир-ирех каялла килет...

Рена, вăтаннипе, хĕрелсе кайрĕ. Пăх-халĕ, епле каласать ун тусĕ... Çапах та вăл шÿтпе тавăрма пултарчĕ.

— Эс, Таня, профсоюза илнĕ чухнехи пеккех тĕплĕн характеристика паратăн мар-и?

— Мĕн, кăмăлсăр-им? Каччăпа паллаштарнă чухне йăлтах пĕлтерни пăсмасть. Çапла вĕт, Женя?

— Эс... Эс хăçан тĕрĕс мар калан̆ă,— терĕ Колесов, гитарине пăтаран çакса.

Кирукăн çак самантра ун пултарулăхне хĕрсене кăтартас килчĕ. Вăл гитара каланине е гитарăпа пĕрлех хăй те юрланине илтсен-и?—чиперккесен савăнăçĕ ниçта шăнăçса пĕтеймĕ. Пĕлĕччĕç вара вĕсен пÿлĕмĕнче мĕнлерех маттурсем пурăнниие.

— Гитара каласа кăтартмăн-и хамăр хăнасене?— сĕнчĕ вăл çавăнпа ним иккĕленмесĕр.

Женя ăна илтмĕш пулчĕ, тем сăлтавпа алăк патнелле утре. Ак тата! Тухса каясшăн мар пуль-ҫке? Сăнран самантрах улшăннă Таня вăл каялла таврăнсан тин çăмăллăн сывласа ячĕ. Рена çине пăхса, йĕкĕтсем сисмелле мар куçхĕсрĕ: калаç та калаçтар çав чĕмсĕре, хăюллăрах пул терĕ пулас вăл куçĕсемпе.

— Сирĕн пата çитес эрнере штукатурсем илсе пыратпăр,— терĕ вара Рена.

— Штукатурсем — тĕлĕнчĕ Колесов,— тăрăласа та çитермен вĕт-ха çуртне?

— Аялти хутсенче ĕçе пуçăнасшăн. Çав тăххăрмĕш позицие ку кварталтах хута ярасшăн теççĕ. Илтмен-и?

Колесов хулпуççисене сиктеркелерĕ.

— Ашă тата? Унта ăшă та кĕртмен-çке. Сивĕ çĕртех ĕçлетĕр-и?

— Çак шăматкунпа вырсарникун ăшшине кĕртме шантарчĕç те-ха.— Рена ку тĕлте хашш сывларĕ,— мĕн тăвăн, тпмĕр кăмакасем хутса е газ приборĕсемпе ăшăтса типĕтме тивет ĕнтĕ пÿлĕмсене. Эпир, штукатурсем, хăнăхнă ĕнтĕ унашкал тертсене...

Калаçу ĕç пирки çеç сыпăннине Таня туйса илчĕ. Женьăн Ренăпа вăл ĕмĕтленнĕ чухлех çывăхланас кăмăл çуккине те сисрĕ. Çапах, каччăн туйăмне тепĕр хут тĕрĕслес шутпа, татах сĕнсе пăхрĕ:

— Çак вырсарникун театра каясшăн та... Мĕнле шутлатан, Женя, тăватă билет илсе каяр мар-и? Кăмăлу пулсан, Кирук та пытăр...

Колессов ăна каласа пĕтерме памарĕ.

— Май килмест, ун чухне манăн — тренировка,— тесе татса хучĕ.

— Эс, Кирук, лайăх ача. Спортра та чăтăмлă, ĕçре те маттур. Теприсем пек вăхăта ним уссăр ирттерместĕн, анчах...— ку тĕлте шăпланса. Женя ассăн сывларĕ, Таньăпа Рена тухса кайсанах чейникрен шыв ярса ĕçнĕскер, чӳрече патне хуллен утса пычĕ.— Тӳррĕн каланăшăн ан çиллен эс, Кирук. Нихçан та хĕрсене юрама ан тăрăш, ăнлантăн-и? Вĕсене мĕн чухлĕ юрасшăн эс — çавăн чухлĕ йăлăнтараççĕ. Анлантăн-и? Ку пĕрре. Тепре — нихçан та мана хĕрсем умĕнчех вĕсем валли ĕç тума ан сĕн.

— Эсĕ гитара каланине çеç итлеттересшĕнччĕ.

— Çавсене-и? Мĕн тума вĕсене эп гитара калани? Итлеме итлĕç-ха вĕсем, юрласа кăтарт-ха тесе те янăрашĕç. Ларсан-ларсан тата пиртен ташша çапма та ыйтĕç, унтан —акробат пек сывлăшра çаврăнкалама... Вĕçĕ-хĕрри çук. Анлантăн-и, Кирук?.. Мĕн, вĕсем чунран ыйтса чунран итлĕç тетĕн-им пире? Нихçан та! Хăйсене çеç итлеттересшĕн.

— Рена лайăх хĕр пек туйăнчĕ...

— Пурте «лайăх» вĕсем, ăнлантăн-и... Эс çамрăк, савпи тупма васкамастăн — питĕ лайăх. Анчах пит асăрханулла пул хĕрсемпе, ăнлантăн-и?

— Вĕсем пирĕн пӳлĕме татах килсе кĕрсен?

— Ларкалаççĕ те — тухса каяççĕ. Хăвалама кирлĕ мар, çав хушăрах — иртсе ларăр, килти пек пулăр, тирпей çукшăн ан тиркĕр тесе те вĕткеленес çук. Анлантăн-и?.. Ан çиллен тӳррĕн каланăшăн. Лайăх ача эс, ӳлĕм те лайăхах пул... Çавăнпа çеç калатăп...

Иосиф пӳлĕме хуçăк кăмăлпа килсе кĕчĕ.

— Мастерпа, Герман Иванчпа, хирĕçсе кайрăмăр.— чунран тарăхса калаçрĕ вăл,— шутла-ха, Женя, тем тумаллаччĕ ĕнтĕ ман? Бригадир çитеймерĕ, вăл пулсан та, машина пушатас кăмăл çукчĕ. Пакетласа тиемен-те-ха кирпĕчне. Тиесе тултарнă турпас пек, пирĕн вара кашни кирпĕчне тытса пушатмаллаччĕи? Пĕр машине çеç çапларах-тăк юрĕччĕ, пĕр сменăрах — виçĕ машина. Шуткă-им? Йышăнмастпăр терĕмĕр, ăçтан килнĕ — çавăнта кайăр! Ну, паллă ĕнтĕ, шоферĕсем — Герман Иванович патне. Ку —ак сана майна-вирна!—пĕр тăхтамасăр пушатма приказ парать, кирпĕч завочĕпе хутшăнусене пăсмалла мар тет, аттук ӳлĕм пирĕн участока час-часах шахвăртса хăварĕç тет. Эпир— патне те пымастпăр,— Иосиф калаçнă майăн пушшех тарăхса пычĕ, аллисене суллакала-

рĕ,— шутла-ха, Женя, виçĕмçулах трестра приказ çырчĕç: пакетсăр кӳнĕ кирпĕче йышăнас çук. Мĕн чухлĕ шавламан-ши ĕнтĕ пакетпа çеç кӳресси çинчен, миçе пухура хускатман-ши ку ыйтăва? Ара, пакетпа кӳнине машина çинченех крангса çаклататăн та — каменщиксен умне! Турпас пек сапаласа кӳнине вара... Эй, тапратас та килмест. Кала, Женя, хăçан стройкăра йĕркс пулать? Хăçан?! Лайăх приказсемпе йышăнусем хăçан пурнăçа кĕреççĕ, Женя!?

Колесов ăна хулпуççинчен тытрĕ те вăйпах пукан çине лартрĕ, эмаль кружкăпа чей тултарса пачĕ.

— Ĕç те лăплан, кунта доклад тума пуху мар... Бригадăн ĕççĕр ларнă сехечĕсем нумай-и?

— Çур кун çурт купаламан. Герман Иванч мана вăрçать. Эс рабочисене ĕçрен пăрăнма хистерĕн тет.

— Мĕнле ĕçрси?— хăрарах ыйтрĕ Колесов.

— Ну, кирпĕч пушатассинчен... Ыранах, ак, пĕр машина та кĕтсе илейместтпĕр тет, кирпĕч завочĕ кунашкаллине — тулли машинăна каялла янине — каçармастех тет. Шупашкарта стройка нумай, кирпĕч завочĕ пĕрре çеç тет. Ну, Çĕнĕ Шупашкартине шута илмесен.

Колесов шухăша кайрĕ, кăштахран, юлташе çине тĕмсĕлсе пăхса, пуçне пăркаларĕ.

— Эс... Эс куншăнах хыпăнса ан ӳк. Пакетсăр кӳнине пушатман — тĕрĕс тунă. Çавă кирлĕ-ха шоферĕсене...

— Шоферсене?!—тĕлĕнчĕ Иосиф.

— Кирпĕч завочĕ çеç айăплă мар куншăн. Водительсем хăйсем те. Пакет хатĕрĕсемпе аппаланас килмен ĕнтĕ е çук та-и хатĕрĕсем. Кузов çĕклесе çĕре тăкса хăварма канас... Чим, маша шухăшран пăрса ятăн эс. Тата мĕн сиксе тухрĕ — кала!? Куçунтан пăхсах пĕлетĕп, хăр куншăнах çапла хыпăнса ӳкес çук эс.

Иосиф хашш! сывласа ячĕ, тăнлавНе аллипе сăтăркаларĕ:

— Чухларăн, Женя, тӳссеймерĕм, Герман Иванча тытса пллерĕм. Мана «провокатор, паникер» тесе хучĕ те.

— Вăл тата?

— Стройуправленп кантурне вĕçтерчĕ. Тытса силлесенех...

Пӳлĕм вăхăтлăха шăпланчĕ. Кирук, вĕсен калаçăвне хутшăнманскер, кĕнеке вуланçи пулчĕ, шухăшĕпе вара Иосиф ĕçленĕ çĕрте çӳрерĕ. Йывăр лару-тăрăва кĕрсе ӳкрĕ Иосиф. Бригадир вырăнне вăхăтлăха юлнăскер, кирпĕч йышăнмасăр пĕтĕм йыша çур кун ахаль тăратни çитмест, участок пуçлăхне Герман Иванович мастера — «тытса силленĕ». Ун вăйĕпе-и? «Тытса силленине» темлерех ăнлан-

малла-ха? Кун хыççăн Иосифсен бригадине, управленире малта пыракансккере, Хисеп хăми çинчен кăлараççĕ ĕнтĕ, куçса çӳрекен вымпелне те туртса илеççĕ. Хăйĕн тата çитес кĕрте салтака каймалла, начар характеристикăна военкомата мĕнле пырса кĕрĕн. Унччен Герман Иваыовичпа йĕркеллĕ татăлсан юрĕччĕ. Лешин, институт пĕтерсе стройкăна килнĕскерĕн, чăнах та, чăркăшлăхĕне мăнна хурасси ытлашшипех ĕнтĕ. Хăйне хирĕçленине те ьăмăллаоах каймасть. Куркаланă ăна Кирук. Тепĕр япала та пур ку хирĕçӳрен хăратакании: Герман Иванович Таньăна юратать. Çапла, ăшне вут илтерсех юратать. Куна Иосифпа Женя пĕлмесен те пултараççĕ, Кирук лайăх чухлать. Мĕншĕн тесен Герман Иванович ун урлă Таня патне темиçе хутчен те çыру пекки çитерсе пачĕ: куçа-куçăн калаçма вăтанать пулинех. Хĕр кашни ăстăрккăрах çав çырусене çĕтсе-çурса тăккаларĕ, кала ăна, терĕ, кая юлчĕ вăл юрату сĕнме, манăн пĕлтĕртенпех тĕсесе хуни пур.

— Герман Иванович,— терĕ пĕррехинче Кирук, мастера çын çук çĕре чĕнсе илсе,— çырăвăра патăм. Анчах Таньăн савнийĕ пур. Пĕлтĕртенпех. Кая юлтăр эсир.

— Хăй çапла каларĕ-и?—мастер те тарăхнипе, те ĕç тухманнишĕн кулянипе хĕрелсе кайрĕ.

— Ахă... Ан çиллентĕр Герман Иванович терĕ, харăсах икĕ çынна савайимастăн терĕ.

Таня каплах каламанччĕ, мастер кăмăлне ытла хуçасран çеç хăйĕнчен пăртак хушрĕ Кирук.

— Кам вăл?— ыйтрĕ Герман Иванович.

— Мĕнле «кам?»— тăрукак ăнланаймарĕ каменщик.

— Таня савнийĕ.

Кирук, кунашкал ыйтăва кĕтменскер, иккĕленсе тăчĕ. Мастер хăй шухăшĕнчен пăрăнмарĕ:

— Савни пуррине пĕлетĕн-тĕк, савнийĕ камне те пĕлетĕн ĕнтĕ.

Кирук тунма е суйма хăнăхман,— ку хутĕнче те тĕрĕссине калас терĕ.

— Иосиф... Капечкин Иосиф. Спринтер, трест чемпионе...— мастер кăна илттĕр тесе, шăппăн каларĕ вăл.

Герман Ивановичей тути чĕтрерĕ. Ара, Таня леш каменщика унран мала хурать те-ха.

Паянхи пăтăрмах хыççăн вал Иосифа вирлĕн тавăрма, усал тума пултарать. Сăлтавĕ çителĕклĕ. Çитмесеы — тэтах шыраса тупĕ.

— Акă мĕн, тусăм, санăн унран каçару ыйтмалла, шав ан çĕклетĕр,— сĕнчĕ Женя, кăштах шухăшланă хыççăн.

Иосиф пуçне пăркаларĕ.

— Май килмест. Мана -вал пушшех чӗрре кӗртсе ярӗ те... Участокра та унпа эп йӗркеллех калаҫасшӑнччӗ. Ҫук вӗт, темтепӗр каласа хӑртма пуҫларӗ те — тӳссе тӑрайма-рӑм. Э-эй, мӗнех пултӑр ӗнтӗ, пӗр вӑхӑт янрашкалать те— иртсе каять ак.

— Бригадӑна тата? Кун хыҫҫӑн бригадӑна кӳрентерме пултараҫҫӗ, ӑнлантӑн-и? Саншӑн усал ят илтрӗмӗр тесе. бригада хӑвна курайми пулӗ. Анланатӑн-и ӗнтӗ мастер тӗллевне?

Иосиф шурса-кӑвакарса кайрӗ.

— Эхе! Тинех чухларӑм халь ун усал тӗллевне... Итле, Женя. пӗлет вӑл ман характера, ҫавӑнпа юриех хирӗҫтер-се ячӗ, юриех чӗрре кӗртрӗ. Эп унпа этемле — вӑл урлӑ-яирлӗ. Эп ӑна тухӑҫлӑх пирки, стройкӑри йӗркс пирки ӑн-лантарасшӑн — вӑл мана «йӗпе сӑмса!» тесе хучӗ. Юриех хӑтланчӗ ҫапла. Хирӗҫтерес тесех... Ак мӗнле майна-вирна кунта, Женя.

— Чӑнах та. вӑл сана юриех хирӗҫтерсе янӑ пек килсе тухать. Анчах та мӗншӗн?.. Юрӗ, хамах кайса калаҫатӑп унпа. Сӑлтав та пур. Ырантан мана сирен участока куҫа-раҫҫӗ.— пӑшӑрханчӗ Колесов.

Ма хирӗҫтерсе янине Кирук паҫӑрах чухларӗ. Таня каменщика хӑйӗнчен, яслӑ шкул пӗтернӗ инженертан, мала хунӑшӑн курайманть вал Иосифа. Тен, ӑҫтан пӗлес, ӑна ӗҫрен те кӑларса ярас тӗллев тытнӑ-ха. Пӗлтермелле кун ҫинчен Женьӑна, усал япала сиксе тухсан кая юлӗ. Юл-ташне ҫӑлма мӗн те пулин шухӑшласа кӑларатех вӑл.

— Женя, эпӗ те санпа пӗрлех пыратӑп. Кантурта ӗҫ пур.— сӗнчӗ Кирук.

Ҫул ҫинче хӑй шухӑшӗсене — Иосифа мастер ма ки-лӗштерменнине пӗлтерсен, Колесов ӑна ҫурӑмран ачаш-шӑн ҫатлаттарса илчӗ.

— Маттур! Юрать-ха вӑхӑтра систертӗн. Эппин, вӑл та Таньӑна... Ну, кун пек чухне Иосифа тӳрре кӑларатпӑрах. Аҫта каяр? СУ начальникне патне-и е малтан Герман Ива-нович патне кӗрсе тухар. Мастер хӑй те начальник патне кнлнӗ пулсан?— Кирук шарламаннине кура, Женя хӑех хушса хучӗ.— Унта та, кунта та ҫитӗпӗр пӗрре тухнӑскер. Пакетпа кӳмен кирпӗче йышӑнман — тӗрӗс тунӑ. пакетпа кӳменнине мастер пушаттарасшӑн пулнӑ — тӗрӗс хӑтлан-ман, трестри приказа пӑхӑнманни ку. Ытти вара — йӑлтах туйӑмсемпе ҫыхӑннӑ. Туйӑмсем хыҫҫӑн кайса, мастер та, каменщик та виҫерен тухнӑ. Анлантӑн-и ӗнтӗ, Кирук. ик-кӗшӗ те вӗсем тӗрӗс туман, ун пек чухне ма пӗр-пӗрне айӑплас. Ҫитменнине, Герман Ивановича прораба куҫа-

расси пирки сăмах çӳрет, упашкал вăхăтра хĕрщĕнех, юратушăнах шав çĕклени ăна ним усă та памасть. Çакна йĕркеллĕ ăнлантарăпăр та... Пире чĕрре кĕртме — Иосиф Капечкин мар эпир. Ыраптанпа вĕсен участокĕнче ĕç мапран — башньăллă кран хуçинчен те нумай килет, куна та пĕлми мар Герман Иванович. Йĕркеллех пулма кирлĕ. Ытах мĕн-тĕк, Иосиф ячĕпе каçару ыйтма та юрать. Ан тив, лăплантăр мастер. Тепĕр эрнерен ахаль те лăпланма кирлĕ-ха.

— Тепĕр эрнерен?— тĕлĕнсе ыйтрăм эп.

— Çапла,— хашш сывларĕ Женя.— Ун чухне Иосифпа Таня пĕрлешеççĕ. Çав ятпа пĕчĕкçĕ вечер пекки тăватпăр.

— Пурăнма тата?—пĕрре çывăхланнă, килĕштернĕ çыннсенчен уйрăлас килмерĕ ун.

— Аялти хутра пĕчĕкçĕ кăна пӳлĕм уйăрса параççĕ.

5

Иосиф сăмахĕ Кирука килĕшмерĕ...

— Арама, Жень, çеклĕсĕр чăматанпа тĕрĕсех танлаштараççĕ: йăтса çӳреме пит кансĕр, пăрахса хăварма — шалккă, ак мĕнлерех майна-вирна...— терĕ вăл, ирĕксĕррĕн кулса,— тĕрĕсех иккен, Жень?

Колесов унпа пĕрле кулм(а шутламарĕ те. Яланхи пек, ăна йӳнеçле шӳтлемерĕ. Кирука çеç мар, Женьăна та килĕшмерĕ иккен ун вĕçкĕнле калаçăвĕ. Пăх-халĕ, ара, авланни уйăх та çитмест, Таньăна, чăматанпа танлаштарса, тиркеме те тапратрĕ-и вара ку. Çемьеллĕ пурнăç йăлăхтарчĕ те-и? Мĕн пакăлтатать пирĕн Иосиф?

— Çак кĕркунне çара каяс çук-тăк, тем тусан та авланмăттăм. Ах мĕнлерех майна-вирна, Жень? Таня хăй те ĕнтĕ... Шалккă пек туйăнчĕ мар-и?— ку хутĕнче Иосиф ӳкĕннĕ пекрех курăнчĕ.

Кама «шалккă»? Общежитири чи хитре те чунĕпе сĕре ырă хĕре-и? Пăтрашăнма тытăнмарĕ-и пирĕн Иосиф? Кирек кам çине Таня ăшшăн пăхтăр çеç — лешĕ, виçесĕр савăнса, ăна юрасшăн, ун кăмăлне çавăрасшăн тем тума хатĕр. Таня ăшшăи калаçнăшăнах кирек хăш йĕкĕт хăйне телейлĕ туйĕ.

Иосифа итленĕ хыççăн чун-чĕри самай улшăннине туйрĕ Кирук, тĕрĕссипе, çакă маларах та палăрнăччĕ, паян вара уççăнах сисĕнчĕ: текех ĕнтĕ Иосифа унăн «чи маттур та тӳрĕ кăмăллă, шанчăклă юлташ» ырăнне хурас килмерĕ, çамрăк каменщик чун-чĕринче ун ырăнне Женя Колесов йышăнчĕ. Пĕрре те икĕпитленсе кăтартмансккр, юлташа ыр

тăвасшăп вута кĕме хатĕрскер. Хĕрсене килĕштерсе кайман çĕртех, Иосиф кăмăлне пăсасран, Тапьăпа та ăшшăн калаçать. Таня килсе кĕмессерсн савăнать. Иосиф савнийĕ те-ха вăл. Пĕркунсспе. юлташпе ннкекрен хăтарас тесе, ăçта-ăçта çитмерĕ пуль; Герман Иванович мастер, вăл ӳкĕтленинс пулах, иимлс шав та çĕклсмерĕ. Хăйĕн куç айĕнчи кăвакĕ эрнесĕр те иртмерĕ.

Чăн та, Таня ĕмстленнĕ пек. Ренăпа çывăхланмарĕ Жсня.

Иртнĕ эрнере стройучастокра Рена Кирука тĕл пулчĕ.

— Ну, каччăсем те!—терĕ вăл,— Жепя манран пăрăнса çӳрст, эсĕ тс сăмах хушмасăр иртсс каясшăн-им? Чисти аптриш сирĕнпе, мĕнле каччăсем пултăрах эсир?

— Каçарăр, асăрхаман,— аванмарланчĕ Кнрук.

— Çапла асăрхамиях нĕрсĕр хĕр-им эп?

— Таньăна та каланăччĕ, эсир — лайăх хĕр, анчах Жсня пирки усал ан шутлăр. Пурнăçĕ ун çавпашкал...— Çамрăк каччă хĕрелсе кайрĕ. Рена чăрр! пăхрĕ уп çине, ăшшăн тав туса пăхрĕ.

— Вăл юрĕ.— терĕ хĕр çав тери ăшшăн,— сан çннчен манăн усал шутлас марччĕ. Асту эс, йĕркеллĕ каччă шутне кĕмс Топорков бригадир мухтани сахал, сана Хисеп хăми çияе кĕртни те çителĕксĕр. Хĕрсеие те вырăна хума. хисеплеме пĕлес пулать. Вара тин йĕркеллĕ, маттур каччă эс. Астунă пул çакна, Кирук.

— Эсир...

— Мĕн «эсир» темелли пур-ши ёнтĕ, Кирук? Мана ватă çын вырăпне хумастăн-и эс е пысăк пӳлĕмри пысăк пуçлăх вырăнне?

Кирук самантлăха çухалсах кайрĕ, ним тавăрса калама аптрарĕ.

— Юрĕ, ап кӳрсн,— ăна тахçанах пĕлнĕ çывăх çын пек калаçрĕ хĕр,— эп санран чăнах та виçĕ çул аслăрах. Мана куншăн <ан тирке. курсан сăмах хушмасăр ан ирт...

«Чим-ха,— шухăшларĕ халь Кирук,— Иосифа хӳтĕлеме, пулăшма вăхăт пултăр тесех Ренăпа туслашмарĕ вĕт пирĕн Жсня? Мĕн кала та, хĕрĕ ку чипер, ăшă кăмăллăскер. Чăиах, илемĕпе. çепĕç чĕлхипе Таньăрап юлмастех вăл. Юратмалли хĕр вăл Рена... Ахальтен ăна Таня пирĕн пата сртсс килчĕ-и?»

— Жсня, Жснь!— чĕнчĕ Иосиф, пӳлĕмри йĕкĕтсем ма шăпланнине чухлаймасăр,— ахаль те мана икĕ çул отсрочка пачĕç, ку кĕркунне çара каятăпах. Атя, иксĕмĕр тупа тăвар: пĕр-пĕрнс нихçан та пăрахмăпăр... Çара каятăп вĕт-ха. пĕр-пĕрин çемйиеенс те пăрахмăпăр.

Колссов хулпуççиссне сиктеркслерĕ, ун çинс тĕлĕнсрех пăхрĕ.

— Каллех-и?— терĕ,— пĕркунах сăмах татнăччĕ-çко эпир caгina. Арçын сăмахĕ пултăр ку тесеттĕмĕр.

— Пулин!—терĕ Иосиф хыттăн, пăлханарах.— Паян тепĕр хут тупа тăвăпăр. Ан тив. çакăнта,— кăкăрне аллипе тытса кăтартрĕ,— çăмал пултăр. Ху пĕлсп, сансăр пуçне çывăх та шанчăклă юлташ çук манăн... Акă Кирук свидетель пултăр. Юрĕ-и, Жень?

— Юрĕ... — Колссов, пукап çинчсн тăрса, ун патнс васкамасăр утса пычĕ. Вĕсен сăмахне итлеме хатĕрленсе. Кирук сывлама та чарăнчĕ. «Акă вăл чăн-чăн туссем, акă вăл сăвă-юрăра мухтакан туслăх!»—вĕлтлстрĕ пуçĕнчс уп шухăш.

«Ах, Кирук, тем тăвас, Иосифран внçĕ уйăх çыру çук ĕнтĕ. Манран сивĕннĕ пск тс туйăнать. Темлс усал япала сиксе тухман-ши?.. Малтан кашни уйăхрах çырса тăратчĕ. Кашни уявра саламлатчĕ., Наташа çуралсан, ун сăнӳкерчĕкнс ярса патăм. Питĕ савăнса çыру янăччĕ çавăн хыççăн. Е савăннă пек çеç туйăпчĕ-ши? Нимле шутлама та аптратăп ĕнтĕ халь. Командирĕсем патне ярас, ăна йывăра кĕртсс ӳкерĕп. Командирссм умĕнчс намăс кăтартнăшăн хама ĕмĕр каçармĕ. Эп хам-и? Хам эрнесерен çыру ярса тăратăп. Адресе улшăннă тес,— çырăвĕсем каялла килмелле... Мĕн тăвас, каласам, Кирук? Эсĕ унпа пĕр пӳлĕмрс пурăиатăн. ăна манран кая пĕлместĕн. Юратагчĕ вĕт вăл мана, Кирук. Юратас çук ма авланĕччĕ. «Сана урăххи çаклатса каясранах авланатăп, капла шанчăклă — халь ниçта та пăрăнаймастăи, мана кĕтетĕн.»— текелетчĕ. Кĕтетĕп вĕт-ха ăна эпĕ, Кирук. çав тери тунсăхлă пулсан та. кĕтетĕп. Эппин ма çыру çырмасть, çунса тухакан чĕрснс ма кăштах та пулин лăплантармасть... Тен, Женя патне çырать. Юлашки хут хăçан илчĕ? Иртнĕ эрнере?! Апла мĕншĕн мана ним тс пĕлтсрмсст? Мĕншĕн килсс каламасть «упăшку çапла-çапла — ан кулян» тесе. Тен... Тен, хыпарĕ мана пĕлтерме юраманни! Каламарĕ-и мĕн çырнине? Ах! сана та каламан апла. Чун систерст, ырă мара ку, Кирук. Тсм тесен те. ырă мара... Кĕçĕрех пырăттăм та Женя патпе. Иосиф мĕн çырнине пĕлес килет-çке, ачана никампа хăварма çук. Юрать-ха эсĕ килтĕн хăть, эс тс килмсссн — такампа калаçса чуна уçас. Итле-ха, Кирук. ан кай кĕçĕр. çывăр кунтах. Леш Герман Иванчă таçтан пĕлнĕ эпĕ кунта — пĕр карчăк çуртĕнчс—пурăннинс. Килст тс — кĕрсс ларать. Пăхать, пăхать... Куна пĕлнĕ-тĕк, общежитпрон

тухмалла та марччĕ. Карчăкĕ ача пăхса пурăнма шаитарчĕ. хăй акă таçта кая-кая çухалать. Ёçе çӳремесен пур енĕпе те кансĕр-çке. Герман Иванович .кĕçĕр те килесрен хăратăп. Çĕркаç та вунпĕрсенче тин тухса кайрĕ. Ларать, мĕн тăвăн, вăйпах тытса кăларса яраймăн. Тем кирлĕ ăна ачаллă хĕрарăмрап...ч Ан кай кĕçĕр, Кирук, юрĕ-и.?. Ыран ир кунтанах ёçе каятăн. Сана курсан. Герман Иванч та мала иртме хăяймĕ. Карчăкĕ çитес эрнере çаврăнса çитме кирлĕ те-ха... Пĕлетĕн-и, хăратăп эпĕ Герман Ивановичран. Э-эй. калама та намăс... Хывăн. Кирук. халех тимĕр кăмака хутса ярăп. ан хăра. ыран ирех тăратса яратăп —ĕçрен юлмастăн...»

Иосифран çакна никам та кĕтменччĕ...

— Хĕр пуçне çаврса ма авлаималла пулнă?! Ма улталамаллаччĕ хĕрс?— тарăхса калаçрĕ Женя, унтан гитара тытрĕ, хĕлĕхсене пĕр-иккĕ сĕртĕнсенех каялла хучĕ.

Сăлтавĕ пур тарăхма: Иосиф салтакран Шупашкара килмест иккен, хăйсен чаçĕ çывăхĕнчп хулана юлать. Таня-и? Унăн пĕр ача анчах, ăна амăшĕ патне леçет те — хĕр пскех çӳрсмс пуçлать. Сăнĕ-пуççĕпе, кĕлеткипе вăл халь те чылай хĕртен ирттерет, çавăнпа Иосиф килменшĕн нимех те çухатмасть пмĕш. Ирĕклĕ. Ирĕклĕ, хаваслă пурнăça ма ытла ирех çемьепе тăлласа лартас, Таньăн куншăн тарăхма та кирлĕ мар. Хăйнех лайăх вĕт-ха ирĕклĕ пурпăç, тепĕр хут çамрăкланса çӳрепи...

Çапла çырса пĕлтернĕ Иосиф: «Халлĕхе адреса кăтартмастăп, кăшт пурăнарахпа хамах хыпарлăп»,— тенĕ.

— Мĕн тăвăпăр, Таньăна хăйне калăпăр-и ку çыру çинчен?— ыйтрĕ Женя Кирукран.

— Хăй патне те çаплах çырнă пулĕ-ха.... Кăшт тăхтар мар-и?— терĕ вăл.

Колесов вăрăммăн сывларĕ.

— Тăхтасан та пăсмасть. Тен, Иосиф кăмăлĕ вылямаа пăрахĕ те ыранах урăхла ӳкĕнĕçлĕ çыру çырса ярĕ.

Таня йывăрлăха кĕрсе ӳкнине. ун çумке Герман Иванович прораб (хăпартрĕç ăна) çулăхпине Женьăран пытарас темерĕ Кирук. Иртнĕ эрнере çавăншăнах — прораб каçпа пырса кĕресренех — Кирук унта çĕр каçнине те каларĕ. Лешĕ чăнах га пырса алăка шаккарĕ вĕт. «Пĕччен мар, шăллăмпа!»—тесе уçмарĕ Таня. Герман Иванович пĕрех шаккама пăрахмарĕ. «Сиве шăннăскере пĕр стакан чей ĕçтерсе яр хуть»,— терĕ. Уçса кĕртсен, Кнрука курчĕ те: «Эхе, çакă-и вара сап шăллу?!»—терĕ, чеен кулса. Тем шутларĕ ĕнтĕ, мур.

— Сан пирки вал темех шутлама кирлĕ мар,— пăлхапса калаçрĕ Женя, кун çинчен пĕлсен,— Таня с*ана Кирук шăллăм тесе чĕннине пурте пĕлеççĕ,— кăштахран йывăррăн сывларĕ,— Герман Иванович та... Авланнă вĕт-ха вал! Тем кирлĕ ĕнтĕ ăна, сĕмсĕрс? Йывăр Таня пурнăçĕ, ăнланатăн-и, Кирук. халĕ ăна пушшех те йывăр. Укçатенкĕрен те, ыттипчен те... Ху ăнланатăн. Çывăх юлташăмăр арăмĕ вăл.

Иосиф хăтланăвĕ ним ăнсăртлăх та мар иккен. Сакнашкал тӳнтерлĕх унăн* тахçанах пулнине каласшăнччĕ Кирук. Авланнă хыççăп та вăл Таньăна темиçе хутчен суйса кӳрентеркелерĕ. Çынран илтсен ĕнепес çук та, хăй хăлхипех илтрĕ-çке • вăл пĕррехинче Иосиф Ренăна та «уçăлса çӳреме» чĕннине, хăйне «унпа хавасларах» тепине... Çук, шарлас мар ун çинчен, Иосифа Женя пĕрех чи шанчăклă та çывăх тус вырăнне хурать. Луччĕ халь Таньăна сплс пулăшасси пирки шухăшлас. Чунĕ систерчĕ: Иосиф çавнашкал çырушăн ӳкĕнекен йышши мар.

Сасартăк темле хăватлă туйăм ярса илчĕ Кирука, пĕтĕм шăмшакпа пит-куçа вĕрилентерсе яракапскер. Пĕрре сикое тăчĕ вăл, тепре вырăн çиие сĕвеисе ларчĕ: куç умĕпче—Таня, хигре хĕрсенчеи хитререх, лайăх çыпсенчен лайăхрах Таня-Танюша. Акă вăл, Кирук шăллăм тесе, ăна ыталаса илет; акă вăл, ун валли раскладушка сарса папă_ хыççăн, хăй те выртма хатĕрленет. кофтине хывать, чалхинс... Пӳртрс çутă сӳнтерст пулин те, урамри электрохунар пайăркисем, чӳречерен хуллен сăрхăнса, ăна лайăхах кăтартаççĕ. Вăтаннипе. Кирук çывăрмăш пулса выртрĕ. Ана Таня «ыйху тутлă пултăр» тесен те, чĕнмерĕ — ап тив. йĕкĕт ним те курман. çывăрать тесе шутлатăр. Танл чăнах та çапла шухăшларĕ. Ун патне хуллен утса пычĕ те, «тутлă ыйха путпăскерс», çӳçĕичсн икс хутчен шăлса илчĕ, вара — хăй кровачĕ çипе кайса выртрс.

«Юрататăп ăна эпĕ.— Женя темле ĕçпе ним шарламасăр тухса кайсан, сасăпах шухăшларĕ Кирук,— чăнласах юрататăп ăна. Чунран-чĕреренех! Хăй те мана... Мапăп качча илмеллеччĕ Таньăпа, Иосифам мар. Э-э, çук. Иосиф пур чухне упашкал ĕмĕт тытни ухмахлапннпе пĕрехчĕ. Чим, ма ухмахланнп?! Систермеллеччĕ Тапьăна Иосиф те лĕнтермĕшĕсем çинчен, унăн тӳптерлĕх те çук маррппе систермеллеччĕ. Бара...»

Кирук пуçне икĕ аллипе ярса тытрĕ, сиксе тăчĕ, пӳлĕмре уткаласа çӳрерĕ, унтан татах вырăиĕ çине ларчĕ. Пĕлет халь ăна мĕнле пулăшмаллппе, ппм нккĕлепмесĕр ăиа:. «Мана качча тух, Танечка. салтака кайсан та пăрахмăп

сана, куллен çырса тăрăп».— тейĕ. Мĕн вăл висĕ çул кĕçĕнреххи! Наташăна иккĕшĕ пĕрле пăхса ӳстерĕç. Ёнтĕ Таня çумне ан та çулăх. Герман Иванович, пĕлсе тăр: Кирук текех ун шăллĕ мар, саккунлă упăшки... Таня хăй те ăна килĕштерет вĕт-ха, килĕштермесен — унашкал ăшшăн кĕтсе илес çук... Анчах...

Кирук пуçие усрĕ. Шăллăм текенскере мĕнле тăрук юрату сĕнĕн? Куçа-куçăн апла сĕнме хăяймастех. Çыру ярас. Ытах мĕн-тĕк... Сăмах сарса, ял кулли тумĕ ăна Таня.

— Кирук, сана Таня чĕнет,— терĕ Рена, темшĕн хĕрелсе кайса,— май килсен, паянах, кĕçĕрех пыма каларĕ.

Ку хутĕнчи пек нихçан та пăлханса кĕменччĕ Таня патне Кирук. Мĕн калĕ ăна кĕçĕр Таня, мĕнле кĕтсе илĕ?

Ак япала! Кирук пыриччен кăна макăрнă иккен вăл. Куççулĕ те типсе çитеймен. Аллинче — çыру. Çук, унăн мар, салтакран янăскер. Иосифран ĕнтĕ.

— Лар, Кирук.— сĕнчĕ вăл пусăрăнчăк сасăпа.— ак кунта,— ман çума килсе лар. Яланхи пекех вăхăтра çитрĕн, спаççипă сана,— ăна ыталаса тытрĕ, пуçне ун кăкăрĕ çине хурса, каллех сассăр макăрма тытăнчĕ.

•Кирук ăна, каплипех курасса кĕтменскер, нимле те лăплантарма пĕлмерĕ. Ун çырăвне илмен те-ши вара вăл? Е илсен те ăна ним вырăнне хумарĕ? Сана Таня чĕнет тесе, Рена суймарĕ-ши апла?

Таня пуçне çĕклерĕ, алшăлли илсе, пит-куçне шăлса типĕтрĕ.

— Кирук, питĕ-питĕ спаççипă сана,— терĕ хурлăхлă хĕрарăм чĕтреллĕ сассипе.— оан хутна илни ман чуна кӳтсе пĕтме памарĕ. Ёнер те, паян та вуларăм ăна. Вуланăçем пурăнас килет...

йĕкĕт тӳсĕмсĕррĕн кĕтрĕ: халех калĕ ак татăклă сăмахне, ăна мĕншĕн чĕнтернине.

— Спаççипă. Кирук, мана юратнăшăн, кил кунтарах, ыталам пĕрре сана куншăн.— йĕкĕт те ăна çăтăр ыталаса тытасшăнччĕ, анчах Таня ун аллисенчен ярса тытрĕ те куçĕнчен пăхрĕ,— ан тарт куçна, Кирук, юратнă чух ăна куçран пăхма вăтанмаççĕ, ӳлĕмрен пĕлнĕ пул...— Ку тĕлте вăл вăрăммăн сывларĕ.— Эпĕ те юрататăп сана, Кирук, пĕрре каларăм-çке, малтанхи ăмăртура курсах килĕштерсе пăрахрăм сана...

— Апла...

— Тăхта, Кирук, пар каласа пĕтерме... Кăçал эсĕ çара каятăн. Техникум пĕтериччен лĕхе отсрочка парсан та.

çитес çул ăсататпăр сана çара. Вара мĕн пулса тухать-ха? Пĕрне кĕтсе типмеллипех типрĕм ак, тата сана кĕтсе пурăнмалла-и? Пĕлетĕн-и, миçерс пулатăп эпĕ эсĕ çартан таврăннă чухне? Пĕлетĕн, паллах. Темле курăнатăп-ха сана эпĕ ун чухне? Юратни вăл лайăх, Кирук, юратни кирек кама та — мана та, акă, савăнтарать. Анчах... Сисетĕп, юратнинчен ытларах — шеллетĕн мана эс. Çакна халлĕхе туймасан та пултаратăн. Кайран вара... Атя, ÿлĕм те Кирук шăллăмах пул эс, Кирук шăллăм вырăнне хурсах юратăм сана, юрĕ-и? Эсĕ те мана аппа вырăнне хурса юрат,— мăйĕнчен çепĕççĕн ыталарĕ вăл йĕкĕте.

Çав вăхăтра пÿртс Рена килсе кĕчĕ.

— Эсĕ мĕн кая юлса çÿретĕн,— вăрçанçи пулчĕ ăна Таня.— кур, паçăртанпах кĕтет сана йĕкĕтÿ, эсĕ пур...

Хваттер хуçине, çитмĕлсене çывхарнă карчăка, кинĕ хăй патне илсе кайсан, Таньăн ĕçе тухас ĕмĕчĕ пачах сÿнсе ларчĕ: «Ачана кама пăхтарăн, яслирс вырăн çук»,— шухăшларĕ вăл.

Çакна пĕлнĕ хыççăн Женя та пăшăрханса ÿкрĕ:

— Тепĕр çулччен мĕнле йÿнеçтеркелесе пурăнмалла унăн? Кăмакине хутма вутти çителĕклĕ-ши хуть?

— Вуттине стройкăран хамах çыртарса илĕп,— явапларĕ Кирук,— брикет та тупма пулать.

Женя текех нимĕн те шарламарĕ; гитарине илчĕ те хĕлĕхĕсене хуллен сĕртĕнсе яланхилле чуна тивмелле юрласа ячĕ.

Все для тебя, дорогая,
Я тебе все-е дарю.
Но только не квартиру,
Сам под забром живу.

...Çав кас Женя таврăнмарĕ. Тепĕр кунне тин, каçкÿлĕм, килсе кĕчĕ. Аçта пулнине Кирук унран ыйтмарĕ, чунĕ çеç систерчĕ: Таня йывăрлăха кĕрсе ÿкнĕ, ăна вăл пĕччен хăварайман. Тен, çамрăк хĕрарăм хăй те ăна унтах юлма ÿкĕтленĕ. Нумаях пулмасть Кирука йăлăннă пек.'

Женя сăнран самаях улшăннă, ытти чухне те каласса кайманскер, халĕ пушшех чĕмсĕрленчĕ.

— Мана... ку эрнере сÿтсе яваççĕ пуль,— терĕ кăштахран, йывăррăн сывласа илсен, нимле сĕтексĕр сасăпа хушса хучĕ:—Лекет мана пĕрре, мана юрĕ-ха, ăна вĕт...

— Мĕншĕн? Мĕн сиксе тухрĕ?!—кăшкăрсах ячĕ Кирук, çав тери пăлханса.

Женя урăх ним те шарламарĕ.

...Çакăн сăлтавне Таня хăех пĕлтерчĕ: каçхипе, Женя ун патĕнче калаçкаласа ларнă чух, Герман Ивановичпа

тепĕр çын, хĕрĕннĕскерсем, пырса кĕреççĕ. «Ачана вăрататăр, шăпрах эсир».— асăрхаттарать çамрăк хĕрарăм. «Ак ку шăп лармасть-çке,— Женя çине аллипе тĕллесе, хыттăн калаçать прораб,— мĕншĕн-ха эсĕ мана çеç шăплантарасшăн, мĕпрен катăк эп унран!» Çăматтине хывманскерех, хăй малалла таплаттарса иртет. «Вал типах ларать, вăл...— тет Таня, пуçне Женя енне сулса,— пирĕн çывăх сын, спреи вара каçсерен тепĕртетсе çӳрес марччĕ, кăштах йĕрне-майне пĕлессчĕ»,— ӳкĕте кĕртессшĕн ăна çамрăк хĕрарăм. Пĕччен мартан-ши, Герман Иванович хĕрсе ситнĕ кăмăлне сиккипех ярать: «Мĕн килместĕп — сан патра çывăх, çын пур... Ма-ха мана та çывăххисен шутне кĕртместĕн, ак ку еркĕнтен,— Женя çине тепĕр хут тĕллесе кăтартать вăл,— эп мĕнрен катăк та мĕнпе кайра?»

«Еркĕн» сăмаха илтсен, Таня, самантрах шурса кайса, шанк хытса тăрать, тем каласшăн — сăварĕ уçăлмасть.

Унччен те пулмасть, Женя вăштах сиксе тăрать те Герман Ивановича хулпуççинчен тытса çĕклет, пĕрре сывланă хушăрах ăна кил хушшине илсе тухса юр ăшне чăмтарать. Прораб юлташĕ, çакна кура, «каçарăр, йăнăш килсе лекнĕ эп» тесе, хăвăрт тухса шăвăнать. «Ытти темех мар,— тет Женя, Таня патне пӳрте кĕрсен,— сан пирки çеç лĕпĕртисем сăмах сарма пултараççĕ».

Таня мĕнех калатăр ăна? Тав тума сăмах çитмест. Пăххалĕ, хăй пирки Герман Иванович шав çĕклессинчен пачах хăрамасть, уншăн ытларах пăшăрханать.

«Маншăн та ан пăшăрхан, Женьă,— тет вăл,— пĕччен хĕрарăм çинчен сăмах сараççех ĕнтĕ, паян тухнă йăла мар». Колесов ун çине тĕлĕнерех пăхать: «Пĕччен хĕрарăм! Мĕншĕн пĕччен хĕрарăм?»—ыйтаççĕ куçĕсем. Вăйпах кулапçп пулать вара Таня: «Иосиф текех таврăнмасть... Мĕн тата, мăшăрлă хĕрарăм-и эп, пĕччен хĕрарăм пулнăран прораб алăк шаккать те...»

— Женьăна паян постройкомра сӳтсе яваççĕ. Хулиганла ĕç тунă теççĕ,— хыпарларĕ Кирук. Çак хыпара ăна Рена каласа пачĕ.

— Миççре?

— Тăваттăра.

Таня сиксе тăчĕ те çывăракан ачи патне пычĕ, ăпа пăртак сăнаса тăрсан, сехет çине пăхса илчĕ: тăваттă çитесси çирĕм минут. Хĕп-хĕрлĕ хăй. Хыпăнчăклă. Ана хӳтĕленĕшĕн пĕçеркке пама пултараççĕ те-ха йĕкĕте.

— Кирук... Кирук шăллăм,— йăлăнчĕ вăл,— юлсам ачапа... Эп постройкой ларăвпе хам çитесшĕн, хам çитсе

ăнлантарасшăн кунта мĕн пулса иртнине. Атту халăх судне пама йышăнĕç тата...

Саккăрсем иртсен тин Таньăпа Женя пĕрле таврăнчĕç. Мĕнле калаçу пулса иртнĕ постройком ларăвĕнче, мĕнле шухăш патне тухнă,— веçех пĕлтермерĕç Те тапратас та килмерĕ çавна Таньăн.- Кăть-кать сăмах хушкаланинчен Кирук ак çакна ăнланса илчĕ: эс унта, Колесов юлташ, мĕнле лекнĕ, мĕншĕн Герман Ивановича хĕ,рарăм патĕнчен кăларса ывăтмалла пулнă тесе ыйтнă-мĕн те Женьăран, ку вара çирĕппĕн каласа та хур: «Хăвăр арăмăр патне ют арçын сĕкĕнсе кĕрсен мĕн тăвăттăр?» Постройкомрисем шалтах тĕлĕнсе каяççĕ: «Арам патне?!, Таня — санăн арăму-и?!»

Пăртаклăха пурте шăпланаççĕ. Çук, пуçне усман Женя. Мĕн вăтанмалли пур пулса иртнишĕн. вăл мар, Герман Иванович никам чĕнмессĕр, вăйпа тенешкел çамрăк херарам патне пырса кĕнĕшĕн вăтантăр. Женя унта ыр туйăмпа пынă. Пĕлсе тăччăр çакна постройкомрисем. «Мĕн илтрĕр — çавна каларăм!»—пат татса калать вăл.

Ĕнтĕ пурте Таня çине пăхаççĕ, Женя сăмахне илтсе самантлăха çăвар та уçайми пулнăскер, кĕçех вăл та чĕтрексен сасăпа сăмах хушать: «Тĕрĕс... Тĕрĕс калать Женя...»

Сĕтел хушшине апат çиме ларсан, Таня постройкомри калаçăва татах тапратрĕ:

— Кайран мĕнле, Жень, Герман Ивановича тапăнма тытăнчĕç. Тӳссе кăна çитер.

Колесов аллине сулчĕ.

— Урăх тапратар мар ăиа...

Кирук пĕрре пăхнипех ăнланаймарĕ: хыпăнчăклă та пек Таня, хаваслă та пек; пит-куçĕнче — уяв та, çил-тăманлă кун та...

Женя çине çамрăк хĕрарăм тем калас-тем ыйтас пекех, çав хушăрах — пăртак пăлханса та тав туса пăхать.

— Ман каяс пуль?— терĕ Кирук, вĕсен кăмăлне чухласа илсен.

— Çывăр кунтах. Çĕр хута ан çӳре.— хирĕçлерĕ Таня,— ларăпăр калаçса... Манăн паян пит нумай калаçас килет, хам вара мĕн каламаллине те пĕлместĕп. Мĕнле сын пултăмах эп... Ман унта ĕнер илсе лартнă сăра пур. Уçар-и пĕрер кĕленчине, Женя?

— Ыран —• тренировка, тепĕр эрнинче — ăмăрту...

Сăмахран сăмах сисмессĕрех Кирукăн пуласлăхĕ çине куçрĕ.

- Салтака кайиччен ан авлан, Рена кĕтме пулать—

кĕтстех. Паллах, хавăн камăлу улшанмасан...— хуллен каласрĕ Таня.

— Пирĕн Кирук авланасшăн-им?— ыйтрĕ Женя,— пуçласа илтетĕп.

— Çук-ха, авланап тенинех илтмен, анчах асăрхаттарса хупи пăсмасть: кăмăлĕ тăрук çав еннелле кайĕ те...

Калаçнине, пĕр-пĕрин çине епле пăхнине курсах туйса илчĕ çамрăк йĕкĕт: Таньăпа Женя паянтанпа — арăмĕпе упăшки...

6

Кирук çартан таврăнни икĕ уйăх та çитмерĕ. Таня, малтанхи пекех чипер те илĕртӳллĕ пӳ-силлĕ çамрăк херарам, ытарайми Таня-Танюша ăна ятарласах хăйсем патне чĕнчĕ. Ыумаях пулмасть илнĕ пĕр пӳлĕмлĕ хваттере. Пите хыпăнчăклă хăй. Пичĕ пĕçерет, куçĕсем вутăн-кăварăн ялкăшаççĕ е тата кăштахран кĕрхи çумăр сăн-питис пĕрĕхет тейĕн çав. Хваттерте вăл пĕчченех. Ытла та канăçсăррăн уткалать. Кирука çĕнĕ участока мастера ларнă ятпа саламласанах тӳссе тăраймарĕ — чун ыратăвне пытармасăр калаçма тапратрĕ.

— Эй, ача! Мĕн тăвас ман халь, Кирук шăллăм, каласам, эс хăть вĕçне-хĕрне тухма пулăшмăн-и?— Сĕтел сунтăкĕнчен çырусем кăларса хучĕ.— Куратăн пуль, эрне пуçнех çырать, ним тавăрма аптратăп. Тем тăвас? Шухăшланипех пуç çурăлса тухать.

— Кам çырать? Мĕн ыйтать?— тăруках ним те ăнланаймарĕ Кирук.

— Кам пултăр ĕнтĕ? Иосиф... Çавă ман ăша пĕçерет, ĕмĕрĕпех канăç памасть пуль ĕнтĕ. Каллех ыйха вĕçтерчĕ ак.

— Иосиф?!

Кирукшăн ку кĕтменлĕх. Шăрăхра юр çунине те ĕненме хатĕр вăл, Женьăпа мăшăрланса пурăнакан чипертен-чипер хĕрарăм тепĕр хут Иосифшăн ыйхă вĕçтерессе вара выртса та тĕлленмен.

Мĕн çырнине ыйтсан, Таня пушшех пăлханса каларĕ:

— Килесшĕн вăл култа!.. Эй, ача! Кунта килме ирĕк ыйтать вăл.

— Аçта «кунта»?

Таня ун çине шывланнă куçпа пăхрĕ.

— Аçта пултăр ĕнтĕ... Май пата, паллах. Ианăшнă эп тет, ӳлĕм пĕрлех пурнăпăр, хамăр ачана хамăрах ӳстерĕпĕр тет.

Кирук ҫăварне карса пăрахрĕ: халь тин-и? Жсиьăпа иккĕшĕ мăшăрланса пурăнинне, Иосиф Таньăна пăрахпине стройуправленирс пуртс пĕлсс ҫитнĕ хыҫҫăн-и? Пĕчĕк Наташа Женьăиа атте теме хăнăхсан-и? Мĕскер пулса иртет ку пурнăҫра?

— Эсĕ ху... мĕн ҫырса ятăн?—ыйтрĕ йĕкĕт.

— Ҫырман ним те... Мĕнех ҫырам-ха ĕнтĕ эп, ну, каласам, Кирук, мĕнсх ҫырма пултарам. Ҫӳрсп хыпăнса...

— Тĕлĕнмелле!.. Унăн лере темĕн сиксе тухнă-им? Ма килссшĕн вăл сан пата?— ннсплс тс ăнланаймарĕ Кирук.

— Аҫтан пĕлем? Хăй пурнăҫра йăнăшнине ҫеҫ пĕлтерет. Ҫине-ҫинех. Кашни ҫырурах.

Тапя ун ҫумне пырса ларчĕ, пуҫне усса, йывăррăн сывларĕ. Пурнăҫра хăйĕн ним канăҫĕпс савăнăҫĕ ҫуккинс пĕлтерсен, Кирук ăна хирĕҫлемесĕр тӳсеймерĕ.

— Кăлăхах эс... Жсньăпа иксĕр лайăх, туслă килĕштерсе пурăнмастăр-им?

— Лайăхах пурăнаттăмăрччĕ тс-ха... Ак ку,— ҫыруссне силлесе кăтартрĕ,— тупăнчĕ таҫтан муртан. Тем тăвас — пуҫ ҫурăлсах тухать.

— Ну, кун пск чухнс мĕн тумаллинс ху лайăхрах куратан. Мĕнсх пуҫа ватмалли пур-ши ĕнтĕ?

Таня Кирук снне питпе пит перĕнсслех ҫаврăнса ларчĕ, куҫĕнчен тилмĕрсе пăхрĕ.

— Эсĕ хăть... Эсĕ хăть апла ан пăрăн-ха, Кирук, ман асапран. Сана миҫе ҫул шăллăм вырăнне хурса юрататăп та, санпа ялан мухтанатăп та... Канаш пар мана эс, Кирук, мĕп тумаллинс кала. Ҫавăнпа сана чĕнтĕм тс, чун валли канăҫ тупас тесе чĕнтĕм. Атту вес... Хама ниҫта чикме пĕлместĕп. Нивушлĕ курмастăн?

Кирук. хăй йывăрлăха кĕрсе ӳкнĕ пек. тарласа кайре.

— Итле-ха. Таня, манпа мар. кун пирки санăн чи малтан Женьăпа калаҫмалла. Эпĕ мар, вал сана лайăхрах канаш парс. Вал... Вал...

— Каларĕ ĕнтĕ вал калас тенине...— Темен ыратнă чухнсхи пск хашлатса сывланă хыҫҫăи хăвăрт хушса хучĕ;— Килтĕр-иҫ. тет. Килтĕр те — калаҫăпăр пĕрре чунран, ун чухне тин камăн мĕн тумалли уҫҫăн курăнĕ тет. Нптĕ килссшĕн ҫунакан ҫынна ма-ха чарса тăмалла тст... Илтстĕн-и, мĕн калать мана Женя? Мĕнле канаш Панине пĕлетĕн-и ĕнтĕ?

Сакна Кирук пушшех те кĕтменччĕ.

— Мĕн ҫинчен «ка-калаҫасшăн» вал унпа?— пăлханнипс чĕлхи тс ҫыхланчĕ йĕкĕтĕн,— вăл й-йăнăшни ҫинчен-н? Й-йăнăшне епле т-тӳрлетмелли ҫинчен-и?

Таня хулпуççиссне сиктеркелерĕ.

— Анланмастăп эп Женьăна та,— тере Таня хуçăк кăмăлпа,— Иосифе шалт тĕлĕнтерет. Ку, ав, юлташ тет ăна. Пыр та калаç унпа, Кирук? Лешĕ тата, лешĕ...— Каллех йĕрес патне çитрĕ Таня,— ху та туятăн вĕт-ха, Кирук, лешĕ кунта ахаль килет тетĕн-им? Кĕтсех тăр, ахаль çӳретĕн йиа! Пирĕн çемьене аркатасшăн вăл! Аран тӳрленсе пыракан сурана тĕкĕнсе ыраттарасшăн. Эй, ача, пĕлет вĕт-ха çакна Женя. Хăй çапах... килсен куç курĕ тет. Мĕнех «курмалли» пур-ши пĕрре килсен? Ах, пуçăм çурăлса тухать. Тем тумалла? Темле тӳссе ирттерес?..

Ĕнтĕ чухларĕ Кирук: нимле канаш ыйтма та чĕнмен ăна Таня. кун пек кăткăс та пысăк ыйтупа çамрăк йĕкĕт канаш пама пултараймасть те. Унпа калаçса, çамрăк хĕрарăм хăй чунне кăштах та пулин пусарасшăн иккен. Хăйне ăнланма тăрăшакан çывăх тусне пĕлтересшĕн вăл пуçран тухман йывăр шухăшсене. Чуна пусаканни сирĕлтĕр те пăртак хăть çăмăл пултăр тесе. Çавăншăн çеç. Хăй те ах! та ах! тесех иккĕленет-тĕк, Женьăн та çывăх юлташĕпе калаçасах килет-тĕк, паллă мĕн пуласси: килетех Иосиф кунта. Мĕнпе пĕтĕ çав калаçу.

Таня кăпа мар, Кирук хăй те çав саманта хăраса, пăлханса кĕтрĕ.

Ансăр çулпа виççĕн пыраççĕ.

Виççĕшĕнчен пĕри — ытлашши. Е пăрăнса каймалла унăн, е тăрса юлмалла.

Икĕ енне уйрăлас самант çитрĕ те пулас: Таня пĕчĕк Наташăна чĕнсе илчĕ, унтан... Эй. ача! Кирук вырттса та тĕлленменччĕ çапла пуласса: Иосиф Таньăна хулĕнчеп тытрĕ те сылтăмалла пăрăнчĕ. Мăн çул çинче. Троллейбус чарăннă теле.

Женя — пĕччен тăрса юлчĕ. Сайралнă çӳçне аллипе сăтăркаласа, Кирук еннелле пăхрĕ, тем калама тăчĕ— шарламарĕ. Пит-куçĕнче ни тарăху, ни хуйхă, ни савăнăç... Пурнăç паллисем пĕртте юлман тесен те йăнăш мар.

Унччен те пулмарĕ... «Атте! Атте!..»— тенĕ сасă янăраса кайрĕ скверта. Пĕчĕк Наташа Женьăна чĕнет иккен, амăшĕ çавăтнăскер, çине-çинех турткаланать вăл. «ашшĕсĕр» ниепле те малалла каясшăн мар, ирĕксĕррĕн уттарнă çĕртех каялла çаврăна-çаврăна пăхать. «Атте! Атя, атте-е!»— терĕ пĕчĕк хĕрача каллех. Ку хутĕнче ун сасси йĕрмĕшсе тухрĕ. Амăшĕ çумĕнче темле ют арçын пырать, ашшĕ—юлать... Аçтан тӳсĕн макăрмасăр...

Хĕрача куçне курăнас мар тесе. Женя пуçне аяккалла

пăрчĕ; Кирук пĕрех асăрхаса юлчĕ: ун куççенчен куççуль тумламĕсем йăрлатса анчĕç.

«Мĕскер пулса иртет ку пурнăçра,— шухăшларĕ йĕкĕт, çаксене курнипе пăшăрханса кайнăскер,— мĕскер ку? Пурнăç ирĕкĕ-и е тӳнтерлĕх?» Виççĕшĕ мĕн калаçнине, Женя Таньăпа Иосифа:«Иксĕр пĕр-пĕрне малтанхи пекех юрататăр-тăк, сирĕн çулăр çине тăмăп»,— теннне вăл, паллах, чухлаймарĕ. Ни Женя патне, ни Таньăсем патне пыма пултараймарĕ вăл. Нихăшне те тӳрре кăларма пĕлмерĕ.

Виççĕшне те вăрçрĕ Кирук, виççĕшне те ятларĕ. Пĕчĕк Наташăна вара чĕрине ыраттарсах хĕрхенчĕ.

...Таньăсене ăсатма чугун çул вокзалне Женя та пычĕ. Кирукпа Ренăран та маларах çитнĕ вăл. Вакун умĕнче вĕçĕмсĕр уткаласа çӳрет.

— Таньăсем ăçта?— ыйтрĕ Кирук, енчен енне пăхкаласа.

— Буфета пылак шыв илме кайрĕç. Ялкĕреççĕ.— Унтан Ренăпа Кирукран çапла ыйтрĕ:— Ну, мĕнле шут тытрăр?

Йĕкĕт ăна тăруках ăнланмарĕ. Рена чухларĕ пулас, хĕрелсе кайрĕ.

— Хăвăршăн лайăх, ан иккĕленĕр,— терĕ Женя кăштахран.

Иосиф Таньăпа пĕчĕк Наташăна хăй пурăинă хулапа илсе каяссине пĕлсен, Женя Кирук патне общежитие пынăччĕ.

— Ренăпа иксĕр пĕрлешсен, пырса пурăнăр ман хваттере. Хам эп общежитие куçса килĕп.

— Хваттертен — общежитие?!— ĕненес те килмеиччĕ ун сăмахне йĕкĕтĕн.

— Мана пĕччене мĕн тумă хваттер? Теприсем хваттер çукшăн мăшăрланма тăхтаççĕ те...

— Эпир — уншăн мар...

— Пĕлетĕп, пĕлетĕп,— терĕ Женя,— анчах çамрăк çемьене уйрăм хваттер кирлĕ. Ан кансĕрлеччĕр ăна. Сăмахпа-канашпа та. Çырупа та. Ыттипе те...

—• Юрĕ, ара... Ренăпа калаçса пăхам...

Халĕ вăл шăпах çавна тепĕр хут тапратрĕ те. Ун чухне ăшĕ вăрканипе çеç Женя çапла сĕнчĕ пуль тенĕччĕ. Шухăшĕ татăклăскерех иккен. Паллă ĕнтĕ, Ренăна ун сăмахĕ малтан шутсăр савăнтарнăччĕ: мăшăрланатăн — тӳрех уйрăм хваттер. Телей мар-им. Пĕр-ик кун шухăшласа çӳресен, хĕр хашш сывласа ак мĕн каларĕ савнине: «Çын пурнăçне ура хурар мар, Кирук. Мĕн тата, Ганя уйрăлса кайре тесе, Женьăн авланмасăр пурăнмалла-им? Хваттерлĕ-

скер, часах ак хӳхём хёрех тупса ярё... Пёччен ёмёр ирттермелли сын мар вал пирён Женя. Систер ӑна, эпир апла тума пултараймастпӑр те...»

Кирукӑн халь ҫак шухӑша пёлтермелле ӑна. Репа та куҫран пӑхса ҫаплах калама систерет. Тӗрӗс те. Ана общежитие кусарса, ун хваттерне йышӑнни, тем тесен те, ытла килёшӳсёр. Никам та ырламан ёҫ. Анчах та мёнле тапратас ҫакна? Ҫыннин, пӑхсах курӑнать, ахаль те ӑшӗ вырӑнта мар. Мён тесен те кунта тӑни, кунта тӑрса пуйӑс ӑсатни — уншӑн асаплӑ самант.

Шӑп ҫаввӑхӑтра Иосифпа Таня, пӗчӗк Наташӑна икӗ епчен ҫавӑтса, вакун патнелле ҫывхарчӗҫ.

— Кайран калаҫӑпӑр эппин,— терё Женя, вёсене хирӗҫ утса. Ак тата! Наташа аллисене тӑрех ун енне тӑсрё. Ҫёклеттерессшӗн. Женя ӑна алла тытрӗ, хӗрача савӑнӑҫне ҫиҫтерсе, икё хутчен ҫӳлелле ҫёкле-ҫёкле илчё, Иосиф сакпа — хёрача ух! та ух! тесе хёпёртенине — кӑмӑллӑн сапаре.

Таня, вёсеичен пӑрӑнарах тӑрса. Кирука хӑй патне кӑчӑк туртрӗ.

— Ну, куратӑи-и ёнтё мён пулса тухиине?— ыйтрӗ шӑппӑн,— атя-ха, иксёмёр кӑшт лереллех утар...— Пӑртак кайсан, ӑна хурлӑхлӑн ӳпкелешрӗ.— Калаҫасшӑн та мар эс тем... Тӗлӗнстӗн пуль' ёнтё манран, вӑрҫатӑп та пуль? Иосиф килнёренпе иксёмёр калаҫаймарӑмӑр та... Мён тата. ахальтен хӑрарӑм-и эп вал килессе пёлсен? Ахальтен Женьӑпа... Куҫран пӑхсах сисстёп, вӑрҫатӑн эс мана халь. Асатнӑ чухне кӑмӑла пӑсасран ҫеҫ ним шарламастӑн. Лайӑх туйӑмпах ларса кайччӑр тетён ёнтё.

— Женя... хӑй мӗнле?-— ыйтрӗ Кирук.

— Женя...— йывӑррӑн сывларӗ ҫамрӑк хӗрарӑм,— темле? Ҫав скверти калаҫуранпа курман та ӑна. Ҫак эрнере куллен икшер смена ёҫлерё. Пуҫлӑхсем ыйтнипе мар, хӑех юри ҫапла стройкӑран татӑлмарӗ пуль тетёп. Мана курас килменнипе^ мар-ши? Иосифпа иккёшё тёл пулкаларёҫ пулас. Каларӑм вёт-ха сана: Иосифа Женя хӑй чёнчё Шупашкара, килех, сана кётетпёр тесе хут ҫырчӗ. Халӗ, ав, ниепле те ӑнланса ҫитерейместёп ӑна. Пёрре — иксёмёре те тытса силлессён туйӑнать, тепре — пёрехмай Иосиф ҫывӑх юлташ иккенне астутарать, эп куна пӗлместёп пек; пёррё — ҫав тери кулянать пек. тепре —- «хӑҫан куҫ умёнчен тасалӑр!» тенён пӑхать... Куратӑн-и ёнтё. Кирук, ман нурнӑҫа?

— Апла... Эиё хам та ӑнланса ҫитерейместёп. Ӑна ҫеҫ мар, сана та... Ыттине те...

— Пĕрех хутчен вăрç-ха мана эе. Кирук, шăллăм пек вăрç пĕрре. Чун лăплантăр.

— Ним ăнланмасăр мĕнле вăрçас-ха.

Таня ирĕксĕррĕн куланçи пулчĕ.

— Куншăн та спаççипă... Итле. Кирук, сана телейлĕ-телейлĕ пурнăç сунатăп. Çавăнпа... Хитринс çеç мар, лайăх çынна юратмалла пултăрччĕ санăн. Çапла, Кирук, лайăх çынна. Ыр чун-чĕреллĕ çынна...

Пуйăс кăшкăртнăран, калас тенине каласа пĕтерей-мерĕ Таня.

Вакуна кĕриччен Иосифпа Женя ыталанса илчĕç. Чим-ха, нимле ыталанни те мар ку. Пĕр-пĕрне хулпуççисенчен тытрĕç — аллисене çийĕнчех вĕçертрĕç. Куçран пăхмарĕç. Çук-çук, мĕн калăр та, ыталанса сывпуллашни марах ку. Темĕн?.. Тĕлĕнмелли çакăнпах пĕтмерĕ-ха. Пит çывăх сын-сене ăсатнă е нумайлăха уйрăлса кайнă чухне куççуль кă-ларни те пулкалать. Ку хутĕнче вара — ăннисем мар, пĕ-чĕк Наташа çеç, перрон çинче таракан Женя çине пăхса. сасăсăр йĕрсе ячĕ. Çакă Кирук чунне ытла çăттăн пырса сĕртĕнчĕ: пырĕнчен темле чăмакка капланса хăпарчĕ. Пу-йăсĕ тапрантăрччĕ хуть хăвăртрах. Килĕшӳсĕр вăл йĕкĕт куççуль кăларни. Наташа та, ав, пĕркунхи пек, «атте! атте!» тесен, чуннс хытарса çитерсймест. Чим-ха, Рена та пуçне аяккалла пăрчĕ ак. Чухлать сăлтавне йĕкĕт...

Часрах тапрантăрччĕ пуйăсĕ, часрах...

Лисаев, И. И. Арçын сăмахĕ : повесть // Лисаев, И. И. Халал : повеçсемпе тĕрленчĕксем / И. И. Лисаев. – Шупашкар, 1986. – С. 172-206.